Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького
0

Пĕр №-рĕ 10 пус
19-мĕш çул тухать
Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр

1937
НОЙАБĔР
23
ЫТЛАРИКУН
268 (4780)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Декабĕрĕн 12-мĕшĕ—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун

Парти активĕн пухувĕ

Нойабĕрĕн 19—20-мĕшĕсенче, Шупашкарта, парти активĕн пухувĕ пулса иртрĕ. Пуху ПСК(б)П Обкомĕн тата Шупашкар хула комитечĕн пленумĕсен решенисем çинчен сÿтсе-йаврĕ. Пуху, ПСК(б)П Обкомĕн IV-мĕш пленумĕ С. П. Петрова ПСК(б)П Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕнчен хăтарнине тата ăна ПСК(б)П Обком бÿровĕпе пленумран кăларнине, çавăн пекех тата Шупашкар хула комитечĕн V-мĕш пленумĕ С. П. Петрова ПСК(б)П хула комитечĕн пĕрремĕш секретарĕнчен хăтарнине тата ăна хула комитет бÿровĕпе пленумран кăларнине, ырларĕ.

Чăваш республикĕнче 1921 çултан пуçласа йулашки вăхăта çитиччченех „Чăваш çĕршывне вĕренекен обществă" текен буржуалă националисла организаци тытăнса тăнă. 1924 çулта ку контрреволюцилĕ обществă хăйĕн отчотне те пичетлесе кăларнă. Обществăн контрреволюцилĕ ĕçĕсем çинчен ПСК(б)П Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулса ĕçленĕ Петров пĕлнĕ çеç мар, вăл хăй те çав организацире тăнă.

Конференцисенче, пленумсенче, парти активĕн пухувĕсенче Елменпе елменисăма хирĕç кĕрешни çинчен Петров сахал мар мухтаннă. Анчах вăл Елменпе елменисăма хирĕç кĕрешем пек çеç тунă. Вăл ун чухне кун пек тумасăр та иртме пултарайман. Елмен уççăнах парторганизацине хирĕç кĕрешсе пынă. „Чувашское хозяйство" журналра контрреволюцилĕ статйа çырса кăларнă. Çакна хирĕç, пĕр йенчен—парти масси хĕснипе, тепĕр йенчен—партин тĕпри оргăнĕсем хĕснипе („Болшевик" журналра тухнă обзор) шарламасăр иртме пултарайман вăл.

1929 çулта Елмене тăрă шыв çине кăларам пекки тунă, çав вăхăтрах, ăна хÿтĕлесе, витсе пынă. Ăна çак факт та аван кăтартать. Горькире Елмене партирен кăларнă хыççăн, 1932 çулта Петров Елмене парти курсĕнче вĕрентме чĕнсе килнĕ. Елмен вилнĕ хыççăн, Елмен партишĕн пĕтĕм чĕререн тăна болшевик пулнă тесе ун çинчен хаçатсенче некролог çапса кăларнă. Унтан та ытларах, Елмене памйатник лартма директивă панă. Ку ĕçе пурнаçлассине Чăваш Тĕпĕçтăвком секретарĕ пулса ĕçленĕ Харитонов националис хăй çине илнĕ.

Петров—болшевикăн сăн-сăпатне çухатнă икĕ-питлĕ çын.

Буржуалă националиссемпе кĕрешсе пырас вырăнне Петров вĕсене пур çĕрте те ответлă вырăнсене лартса пынă, социалисăм строителствин тĕрлĕ участкисенче контрреволюцилĕ ĕçсем туса пыма май панă.

Петров, халăх тăшманĕсемпе кĕрешсе пырас вырăнне, вĕсемпе çемйеленсе кайнă, политикă йенĕпе те пăсăлнă, тăшмансене хÿтĕленĕ (Зефиров, Андрейев, Кузнецов, Никитин, Токсин тата ыт.). Буржуалă националиссене витсе пурăнакан Кузнецова професснăр йатне пама тăнă.

Петров парторганизацине болшевика тивĕçлĕ мар методсемпе йертсе пынă. Самокритикăна пытарнă. Çĕнĕ кадрсем кăларассине чăрмантарса тăнă. Парторганизацинче йăпăлтату чирĕ сарнă.

— Силверстов йулташ буржуалă националиссем тата вĕсене хÿтĕлесе тăракан Петров çинчен тухса каланă хыççăн, Петров мана Силверстов йулташ çинчен парти пухувĕнче ыйту лартса, ăна айăплама хушрĕ, тет Панкратов йул. Силверстов йулташа айăплама кирли çинчен Петров хула комитетĕнче ĕçлекенсене те кăтарту панă. Петров çавнашкал тăтăшах хăтланнă.

Парти Обкомĕн кив руководстви, унăн пуçлăхĕ Петров работниксене туман ĕçех тунă тесе улталама вĕрентнĕ. Сăмахран, Чăвашлестрест, Финанс халăх комиссариат, Хатĕрлев комитет, Çĕрĕç халăх комиссариат, Çутĕç халăх комиссариат руководителĕсем Чăваш Обкомне суйа рапăртсем тăратнă. Хăй черечĕпе çакăн пек рапăртсемпе Обком тĕпри оргăнсене улталама пăхнă. Çакăн пек „ĕç меслечĕн" йулашкисем халĕ те пирĕн ĕçре хыттăнах сисĕнтереççĕ. Республик чылай участкăсемпе кайа йулнă. Чылай предприйатисем хăйсен планĕсене тултарса пымаççĕ. Йалхуçалăх йенĕпе те çавăн пекех. Петров йединоличниксем çине ытларах налогсем хуртарса чылай районсенче перегибсем тутартарнă.

Шупашкарпа Канаш хушшинчи чукунçула тăвасси çинчен Петров сахал мар калаçнă, анчах ĕçе организацилеме тăрăшман. Пирĕн задач—çак строителствăна çак кунсенче прорывран кăларасси пулать.

Петров партин шалти ĕçĕсене, парти вĕренĕвне, политикăла воспитани ĕçне йапăхтарса йанă.

Парти членĕсене çĕнĕрен илес ĕç те питĕ начар пырать. Шупашкар хулинче пĕтĕмпе те 12 çынна çеç парти ретне илнĕ. 23 çынна парти кандидатĕнчен члена куçарнă. Типографи, Автогужтрест, Чебторг, Çутĕç халăх комиссариачĕ, Çĕрĕç халăх комиссариачĕ, Йустици халăх комиссариачĕ, т. ыт. парти организацисенче пĕр çынна та партине илмен.

Çак фактсем вĕсем пурте Петров парти организацисенчен те, массăсенчен те уйăрăлса кайни çинчен калаççĕ. Çак фактсем вĕсем Петров политикă йенчен болшевикăн сăн-сăпатне çухатни çинчен калаççĕ. Çавăнпа та парти активĕн пухувĕ Петрова партирен кăларса суд умне тăратмали çинчен кăтартса хăварчĕ.

Петров партипе советăн йертсе пыракан оргăнĕсене тăшманла етемсене: буржуалă националиссене, троцкиссене лартса тухнă (Никитин, Токсин, Иванов, Кузьмин, Жуков, Анисимов, Йурйев, Чернов т. ыт. те).

Кам пĕлмест Йурйевăн партийе хирĕçле ĕçĕсем çинчен? ПСК(б)П Обкомĕн облăçри конференцийĕ Йурйева Обком пленумĕн членне суйламан пулсан та, Петров ăна Çĕрĕç халăх комиссарĕ туса хунă. Парти Обкомĕн советпа суту-илÿ пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ Кузьмина—Суту-илÿ халăх комиссарĕ туса хунă, т. ыт. те.

„Чăваш Коммунĕн" редакторĕ пулнă Иванов П. И. буржуалă националиссемпе пĕрле ĕçленĕ, вĕсене хÿтĕлесе витсе пурăннă. Унтан та ытларах, вĕсене хаçатра трибунă панă (Кузнецов, Хусанкай, Шупуççынни, Краснов (Асли), Митта т. ыт.). Иванов вĕсене тăрă шыв çине кăларма шутламан, вăл йулашки кунччченех ним шарламасăр ларнă. Иванов хаçат ĕçне урăхлатса çĕнетес вырăнне, редакци аппаратне халăх тăшманĕсене, клас тĕлĕшĕнчен йут етемсене (Авксентйев, Йефремов, Наманган, т. ыт.) лартса пынă. Хăйĕн ĕçĕнче пĕтĕмпех Петровăн йурăхсăр ĕç меточĕсемпе усă курнă. Хаçат работникĕсене вĕрентсе пырас вырăнне, кăшкăрнă, вăрçнă. Çапла вара вăл редакцинчи работниксенчен çеç мар, пĕтĕм массăсенчен татăлса кайнă. Йалкорсене те йертсе пыман. Паллах çакăн хыççăн, Иванов Обком пленумĕн членĕ, тата Чăваш Тĕпĕçтăвком президиум членĕ пулса йулма тивĕçлĕ мар.

Пухура 28 çын прение тухса калаçрĕç.

Петров Чăваш парторганизацинче 11 çул хушши „ĕçленĕ." Анчах вăл Парти Тĕпкомĕ умне Чăваш республикин хуçалăхĕпе култури çинчен пĕр ыйту та тăратман. Çак майпа вăл Елменĕн „Октабĕр революци чăвашсене нимĕн те паман" текен совета хирĕçлĕ „теорине" чăна кăларма тăрăшнă. Анчах вĕсен шучĕ тухмарĕ. Чăваш республикĕ Парти Тĕпкомĕпе Сойуз Правителстви йертсе пынипе тата вырăс пролетариачĕ пулăшнипе иртнĕ çирĕм çул хушшинче хуçалăх, култура строителствин пур йенĕсемпе тăвăллăн ÿсрĕ.

Актив пухувĕ çакна та палăртрĕ. Обкомăн çĕнĕ составĕ Петров руководствин сийенлĕ, тивĕççĕр ĕç меслечĕсене вăхăтра тăрă шыв çине кăларма пултарайман.

Парти Обкомĕн 3-мĕш пленум итогĕсем тăрăх пуханнă актив пухувĕнче Петрова политикă йенчен шанмăла марри çинчен ыйту лартсан, Обкомпа хула комитет бÿровĕн уйрăм членĕсем (Иванов, Павлов, Смирнов) хăйсен сăмахĕсемпе парти активне тĕрĕс çул çинчен пăрса йанă. Парти активĕ ПСК(б)П Обкомĕн çĕнĕ руководствине çак йанăша тÿрлетме, халăх тăшманĕсене хирĕç болшевикла хăйулăхпа кĕрешсе пыма, болшевикла самокритикăна вăйлатма хушса хăварчĕ.

Пирĕн задач—Обком пленумĕн решенисем тăрăх хамăрăн пĕтĕм ĕçсене Парти Тĕпкомĕн феврал-мартри Пленумĕн решенисемпе вăл Пленумра Сталин йулташ кăтартса панисем пек вăйлатса йамала.

Националнăçсен Советне депутата суйлама палăртнă кандидат

Александр Федорович Горкин

Канаш суйлав округĕ № 500

Канашри вагонсем йусакан заводри рабочисем, инженерсем, служăщисем, коммуниссемпе комсомолецсем тата Канаш районĕнчи „Красное пламя", „Мотор", „Красная Чувашия" колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсем Националнăçсен Советне Александр Федорович **Горкин** йулташа кандидата тăратрĕç.

А. Ф. Горкин йулташ 1897 ç. Твер кĕпĕрнинчи Бежица уйесĕнче, Селищенск вулăсĕнче, Рамешки йалĕнче çуралнă.

1916 çул пуçламĕшĕнче Горкин йулташ болшевиксен партине кĕрет. Твер организацийĕн пропагандисĕ пулса вăрттăн ĕçлет. 1917 çулхи августран тытăнса 1919 çулхи ийунччĕн Горкин йулташ Твер хулинче хула совечĕн секретарĕ, унтан Твер кĕпĕрни ĕçтăвкомĕн председателĕ пулса ĕçлет.

1919 çулта Горкин йулташа Курск хулине, Курскри ЧК коллегин членĕ пулса ĕçлеме йанă. Ку ĕçре вăл Курск хулине Деникин пырса кĕреччченех ĕçлет. 1920 çулта çулла ăна Кавказ фронтне, Мускав курсанчĕсен 2-мĕш бригадинчи политпай начальникĕн заместителĕ пулса ĕçлеме йанă.

1921 çулта ăна партин Твер кĕпĕрне комитечĕн ответлă секретарне суйлаççĕ. 1922 çултан тытăнса 1924 çулччен партин Киргиз Обкомĕн агитаципе пропагандă тата организаци пайĕн заведуйущийĕ пулса ĕçлет. 1924 çултан тытăнса 1926 çулччен Мускавра, йалхуçалăх кооперации йенĕпе йертсе пыракан ĕççенче ĕçлет. 1926 çултан тытăнса 1929 çулччен ПСК(б)П Тĕпкомĕн ответлă инструктăрĕ пулса ĕçлет.

1929 çулта ПСК(б)П Тĕпкомĕ Горкин йулташа Вăтам Атăл крайĕнчи ПСК(б)П Крайкомне йарать. Вăл кунта агитаципе массă пайĕн тата йалти ĕç пайĕн заведуйущийĕ пулса ĕçлет.

1931 çулхи октябĕртен тытăнса вăл Краснăй Професссурăн Аграрнăй институтĕнче вĕрентет. Ку вăхăтра ăна партин Фрунзе райкомĕн членне, Мускав облăçĕнчи Контрол Комиççин членне суйлаççĕ.

1932 çулхи май уйăхĕнчен тытăнса вăл каллех ПСК(б)П Тĕпкомĕнче организаципе инструктăр пайĕн заведуйущи заместителĕ тата Тĕпкомăн йалхуçалăх пайĕнчи сектăр заведуйущийĕ пулса ĕçлет. 1933 çул вĕçĕнче ăна Вăтам Атăл крайĕнчи ПСК(б)П Крайкомĕн иккĕмĕш секретарне суйлаççĕ.

1934 çулхи декабĕртен тытăнса 1937 ç. ийулĕн 9-мĕшчен Горкин йулташ ПСК(б)П Оренбург Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулса ĕçлет.

1937 çулхи ийулĕн 9-мĕшĕнче ССР Сойуз Тĕпĕçтăвкомĕн 4-мĕш сессийĕн постановленийĕпе Горкин Александр Федорович йулташа ССР Сойузĕн Тĕп Ĕçтăвакан Комитет президиумĕн членне тата секретарне суйларĕç.

Александр Федорович Горкин пирĕн рабочисенчен, хресченсенчен, совет интеллигенцинчен тухнă чи лайăх, социалисăмшăн пынă кĕрешÿре пиçнĕ çынсенчен пĕри. Вăл—Ленин—Сталин партин ĕçĕшĕн чунтан тăрăшса ĕçлекен, ĕç халăх тăшманĕсене хирĕç пĕр пăрăнмасăр паттăрăн кĕрешекен вата болшевик.

★ О ★

Националнăçсен Советне депутата суйлама палăртнă кандидат

Петр Иванович Пумпур

Вăрнар суйлав округĕ № 504

Петр Иванович Пумпур 1900 çулта, Лифлянди губернин Рига уйесĕнчи Платерск вулăсĕнче (халĕ Латви) батрак семйинче çуралнă. Ашшĕпе амăшĕ 1905 çулччен Лифлянди губернинче йалхуçалăхĕнче тара кĕрешсе ĕçленĕ. Унтан Курлянди губернине куçса 1910 çулччен хăма çуракан заводра чернорабочи пулса ĕçленĕ, унтан каллех Лифлянди губернине куçса 1915 çулччен вăрман хуралçинче ĕçленĕ.

1916 çулти декабĕрте çемйипех Калуга губернинчи Козелск уйездне куçнă. Ашшĕ йалхуçалăх инвентарĕсене йусас ĕçе вырнаçнă, П. И. Пумпур хăй уй ĕçĕнче ĕçлеме вырнаçнă, хĕлле ремесла шкулĕнче слесăр пулма вĕреннĕ. Унта вăл 1918 çулти çуркуннеччен вĕреннĕ. 1918 çулта П. И. Пумпур Мускава кайса хăй ирĕккĕн Хĕрлĕ çара авиаотрйада шофер помощникне, унтан самолот çине моторист помощникне кĕнĕ. Хĕвеланăç, Хĕвелтухăç тата Кăнтăрти фронтсенче пулнă. 1923 çулта лотчиксен шкулĕнчен вĕренсе тухнă. 1924 çулта Мускавра лотчиксен çар шкулĕнчен вĕренсе тухнă.

Халĕ П. И. Пумпур Мускав çар округĕн Сывлăшри вăйсен начальникĕ. Рабочи çемйинчен тухнă рабочи, ПСК(б) Партин членĕнче 1919 çултанпа тăрать. Çар званине комкор йатне панă. Вăрçă ĕçне вĕрентес ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартнăшăн тата ССР Сойузĕн оборонине çирĕплетес ĕçре хăйĕн пĕтĕм вăйне социалисăмла çĕршыва панăшăн ăна 1937 çулăн йанварĕн 2-мĕшĕнче Ленин орденĕпе наградăланă.

Тата ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн 1937 çулхи ийулĕн 4-мĕшĕнче тухнă постановленипе Совет Сойузĕн Геройĕ йатне панă тата иккĕмĕш хут Ленин орденĕпе наградăланă.

★ О ★

П. И. Пумпур кандидатуришĕн сасăлатпăр

ВĂРНАР (хамăр корр.). Пумпур йулташ Националнăçсен Советне депутата суйланма Вăрнар суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшÿ пани çинчен Мамалай колхоз председателĕн заместителĕ Игнатйев йулташ пуринчен малтан пĕлнĕ. Вăл пĕтĕм чĕререн хавхаланнипе колхоз итемĕ çине колхозниксем авăн çапнă çĕре васкаса чупрĕ.

— Йулташсем! Пумпур йулташ Националнăçсен Советне депутата суйланма Вăрнар суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшÿ панă, терĕ вăл.

Игнатйев йулташ Пумпур йулташ Вăрнар суйлав округ комиççине йанă телеграммăна вуласа пачĕ.

— Пумпур йулташ Мускав çар округĕн сывлăшри вăйĕсен начальникĕ пулса ĕçлет. Пирĕн асла тăван çĕршывăн тĕрекне çирĕплетес çĕрте хăйĕн пĕтĕм вăйне панăшăн, вăл ĕçре геройла ĕçсем тунăшăн ăна 1937 çулта Ленин орденĕпе наградăланă, ССР Сойузĕн Геройĕ йатне панă. Пумпур йулташ Вăрнар суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшнĕшĕн чĕререн савăнса, çак пысăк чыса стахановла ĕçленипе тивĕçе тухар! Хамăрăн сасăсене пурте Пумпур йулташ кандидатуришĕн парăпăр!—тет Василий Йефремович.

Унтан 57 çулхи ватă колхозник Илйа Алексейевич, колхозăн çамрăк стахановки Лукина Маруçа тухса калаçрĕç. Митинг пĕр сасăпах резолюци йышăнчĕ.

„Епĕр, Мамалайри Ворошилов колхоз колхозникĕсем, Николай Иванович Пумпур йулташ Националнăçсен Советне суйланма Вăрнар суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшнĕшĕн чĕререн, вĕçĕмсĕр савăнатпăр. Çак пысăк чапла чыса тивĕçлĕ пулма тата пысăк хаçгарлăхпа стахановла ĕçлетпĕр.

Епĕр мĕн пур Вăрнар суйлав округĕнчи суйлавçăсене Пумпур йултăшшăн сасăлама чĕнетпĕр. Сывă пултăр аслă çулпуçĕ Сталин йулташ!

Сывă пултăр Совет Сойузĕн Геройĕ Пумпур йулташ!"—тесе çырнă колхозниксем йышăннă резолюцире.

Митинг хыççăн каллех трактор кĕрлесе карĕ. Итем çинче татах та хĕрÿлĕрех ĕç пуçăнчĕ.

Ейзенбраун

★ О ★

Амстердамри Интернационалăн делегацийĕ Мускава килме тухнă

ПАРИЖ, 21-XI (ТАСС). Амстердамри Интернационалăн делегацийĕ Мускава, профсойузсен пĕрлĕхне пурнăçа кĕртесси çинчен калаçма килет. Хал делегаци Мускава килме тухнă. Делегаци составĕнче—Францири ĕç конфедерацин генералнăй секретарĕ, вăлах Амстердамри Интернационалăн вице-председателĕ Жуо, Амстердамри Интернационалăн генералнăй секретарĕ Шевенелс тата Амстердамри Интернационал секретарĕн помощникĕ Шталц.

Националнăçсен Советне депутата суйлама палăртнă кандидат

Марийа Михайловна Сахйанова

Шупашкар йал суйлав округĕ № 497

Марийа Михайловна Сахйанова 1896 çулхи йанвар уйăхĕнче, Иркутск кĕпернинчи Балаганск уйесĕнчи, халĕ Хĕвелтухăç Çĕпĕр облăçне кĕрекен Бурйат-Монгол наци округĕнчи Уçт-Ордынскра чухăн бурйат çынни çемйинче çуралнă.

1914 çулта Сахйанова йулташ второкласнăй шкула пĕтерет. Малала вĕренме укçа пулман пирки унăн ашшĕ хуçалăхĕнче ĕçлеме тивет. Анчах вăл вĕренесшĕн çав тери çуннă. Ăна нимĕнле йăвăрлăхсем те чарса тăраймассĕ. 1915 çулта учителсем подпискă хучĕ тăрăх пухнă укçапа Петрограда кайса, Лесгафт йачĕпе тăракан курса волнослушателницă пулса кĕрет. Анчах çак курсра ăна нумай вĕренме тивмен, мĕншĕн тесен тăранса пурăнмалăх унăн йе грузчикра ĕçлесе, йе хаçат сутса, йе ăçта та пулин служăщи пулса ĕçлесе укçа тупма тивнĕ.

1916 çулта вара вăл Путилов заводĕнчи болница кассинче ĕçлет.

1916 çул пуçламĕшĕнче Сахйанова йулташ парти ретне кĕрет, Питĕрте вăрттăн ĕçлеме пуçлать. 1916 çулхи декабĕр уйăхĕнче Петроградри болшевиксен организацине тытнă чухне, патша жандармерийĕ, Сахйанова йулташа ытти болшевиксемпе пĕрле арĕслесе Петроградри хĕрарăм тĕрмине хупса лартать. Çак çирĕп, нимĕн иккеленмен болшевик-боецăн çĕнтерÿ шанăçне арĕс те, тĕрмесем те пĕтерме пултарайман.

Февралти буржуалă-демократилĕ революци ăна патша тарçисен аллинчен хăтарать. 1917 çулхи февралĕн 21-че тĕрмерен тухать, февралĕн 23-мĕшĕнчен пуçласа Ленинградра февралти революцине активлăн хутшăнать.

1917 çулхи февралти буржуалă-демократилĕ революци хыççăн, Сахйанова йулташ йаланах партин ответлă ĕçĕсенче ĕçлет.

Феврал революци хыççăнах вăл Петроградри парти организацинчи иккĕмĕш райком секретарĕ пулса ĕçлет (ун чухне председателсем тата секретарсем пулнă). Унтан вăл хăй çуралнă çĕршыва кайать. 1917 çул вĕçĕпе 1918 çул пуçламăшĕ хушшинче партин ответлă ĕçĕнче—Партин Иркутск комитечĕн секретарĕ пулса ĕçлет. Кунта Сахйанова йулташ Иркутск хулинче влаçа Советсем туртса илессишĕн пулнă декабĕр уйăхĕнчи çапăçусене активлăн хутшăнать.

1918 çул—граждăн вăрçин хайар тапхăрĕ пуçланса кайать. Краснов генералăн, Чехословаксен корпусĕн, Колчакăн т. ыт. белогвардейцăсен ушкăнĕсем совет влаçне çĕмĕрсе тăкас ĕмĕтпе Совет республикине йĕри-тавра хупăрласа илчĕç. Сахйанова йулташ парти чĕннипе фронта тухса кайать. Чехословаксемпе кĕрешнĕ чухне агитатор пулса ĕçлет. Колчак Урал тата Атăл патнеле çывхарса килнĕ чухне, Сахйанова йулташ Инçет-Хĕвелтухăçĕнче вăрттăн ĕçлет; ку ĕçе вăл 1918 çул пĕтнĕ тĕле кайнă. 1919 çулта тата 1920 çул пуçламĕшĕнче вăл партин Инçет-Хĕвелтухăçĕнче вăрттăн ĕçлекен комитечĕн секретарĕ пулса ĕçлет.

1920—1921 çулсенче вăл Инçет-Хĕвелтухăçĕнче тата Çĕпĕрте партин тĕрлĕ поручениĕсене туса пырать.

1922 çулта Сахйанова йулташ Свердловски Коммунисла Университета вĕренме кĕрет. Унта вăл 1923 çулăн вĕçне çитиччен вĕренет.

1923 çулхи нойабĕр уйăхĕнче ăна каллех парти ĕçне—партин Бурйат-Монгол Обкомне йараççĕ, унта вăл малтанах Културпроп пайĕн заведуйущийĕ, 1924 çулхи нойабĕр уйăхĕнчен пуçласа 1928 çулхи декабĕр уйăхĕччен—ПСК(б)П Обкомĕн ответлă секретарĕ пулса ĕçлет.

1929 çулта ăна ПСК(б)П Тĕпкомне чĕнсе илеççĕ. Унта вăл ответлă инструктăр пулса ĕçлет.

1930 çулта вăл Краснăй Професссурăн Историлĕ-партилĕ институтне вĕренме кĕрсе унта 1932 çулччен вĕренет. Краснăй Професссурă институтне пĕтернĕ хыççăн вăл 1932—1933 çулсем хушшинче каллех ПСК(б)П Тĕпкомĕнче ответлă инструктăр пулса ĕçлет.

ПСК(б)П XV тата XVI сйесĕсенче Сахйанова йулташа Тĕп Контрол Комиççи членне суйлаççĕ, XVII сйесра, 1934 çулта, ăна ПСК(б)П Тĕпкомĕ çумĕнчи Партилĕ Контрол Комиççи членне суйлаççĕ. 1934—1936 çулсем хушшинче вăл Партилĕ Контрол Комиççи аппаратĕнче ĕçлет.

1936 çултан пуçласа Сахйанова йулташ Партилĕ Контрол Комиççин Чăваш республикĕнчи уполномоченнăйĕ пулса ĕçлет. Чăваш республикĕнче троцкисла-бухаринла ирсĕрсен йулашкисемпе, буржуалă националиссемпе кĕрешес тĕлĕшпе вăл Чăваш парторганизацине пысăк пулăшу пачĕ. Сахйанова йулташ Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, пирĕн çĕршывра социалисăм тăвасишĕн нимĕн иккеленмесĕр кĕрешекен çирĕп, кĕрешÿре пиçнĕ боец.

Сойуз Советне депутата суйлама палăртнă кандидат

Зойа Ананйевна Андрейева

Шупашкар суйлав округĕ № 364

ЗОЙА АНАНЙЕВНА АНДРЕЙЕВА — Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ. Сойуз Советне депутата суйлама Шупашкарти № 364 суйлав округĕнче регистрациленĕ.

* * *

Шупашкар хулинчи „Волосвет" електростанцинчи тата хулари ытти предприйатисенчи работницăсем, рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служăшчисем Чăваш республикинчи чи лайăх хĕрарăмсенчен пĕрне, çирĕп большевика — Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председательне — Зойа Ананйевна Андрейевăна ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Сойуз Советне депутата суйлама кандидата палăртрĕç.

Зойа Ананйевна 1899 çулта Вăрнар районĕнчи Урапаш йалĕнче йалти фельдшер çемйинче çуралнă. Унăн ăнланулă ĕçле пурнăçĕ Аслă Октябер революцийĕн пуçланать. Çак вăхăт тĕлне вăл йалти учительница пулнă. Çамрăк Зойа Ананйевнă Октябер революцийĕн малтанхи кунĕсенчех йалти общественнăла организацисенче пите активлăн ĕçлесе пынă.

1925 çулта, хăйне Урапаш вулăсĕнчи ĕçтăвакан комитет председателĕн заместительне суйланă хыççăн, Зойа Ананйевна совет ĕçне кусать. Ун анчах 12 çул хушшинче вăл совет тата парти органĕсенче чылай çĕрте ответлă вырăнта ĕçлет. Вăл ПСК(б) Парти Йĕтĕрне тата Çĕрпӳ уйес комитечĕсенче хĕрарăмсен организаторĕ, Çĕрпӳ уйес ĕçтăвком членĕн кандидачĕ, Канаш райĕçтăвком членĕ пулса ĕçлет. ПСК(б)П Канаш райкомĕнче — хĕрарăмсен организаторĕ.

Ăçта та ăна мĕнле ĕçе хушнă — Зойа Ананйевна пур çĕрте те хăйне партин шанчăклă ывăлĕ пек пурнăçа лайăх кĕртсе пынă.

Общественнăлă пысăк ĕçсене туса пырса, хăйĕн идейлă-политикăлă пĕлӳне кунран кун çине тăрсах хăпартса Зойа Ананйевна йалти рйадовой учительницăран государствăлла деятеле пулса тăчĕ. Чăваш АССР Совечĕсен X-мĕш сĕзчĕ Зойа Ананйевнăна Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет членне суйлать. Çав вăхăтрах ăна Тĕп Ĕçтăвком Чăваш АССР Социаллă пулăшу Халăх Комиссарĕ туса хурать. Зойа Ананйевна — Чăваш хĕрарăмĕсенчен пирвайхи Халăх Комиссарĕ.

Зойа Ананйевна рабочисемпе Хресченсен Инспекцийĕн Халăх комиссариачĕн органĕсенче, парти коллегийĕн тата ПСК(б)П Тĕпкоме çумĕнчи Парти Контролĕ Комиссийĕн Чăваш АССР-чи уполномоченнăйĕн аппаратĕнче чылай вăхăт ĕçлесе, совет аппаратĕнчи бюрократисăмпа хирĕç хайаррăн кĕрешсе пычĕ, парти тата совет аппарачĕсенчен халăх тăшманĕсене: фашисăм агентĕсене, троцкисĕсене, бухаринцăсене, буржуллă-националисĕсене тымарĕпех какласа пĕтерес ĕçре вăл пит активлă ĕçлерĕ, ĕçлет те.

Зойа Ананйевна çирĕп, тĕреклĕ большевик. Вăл халăх тăшманĕсене хирĕç пĕр килĕшӳсĕр кĕрешет. Ленинпа Сталин партийĕн ĕçĕшĕн, рабочисемпе хресченсен ырă пурнăçĕшĕн хăйĕн мĕн пур вăйне парса кĕрешет. Çакна Чăваш халăхĕ лайăх пĕлсе тăрать.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн VIII сессийĕ ĕçхалăхĕн чи лайăх хĕрне, Зойа Ананйевнăна Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком председательне суйларĕ.

Епĕ ăна мĕншĕн йурататăп

Епĕ Зойа Ананйевнăпа 1925 çулта, Çĕрпӳ уйесĕнчи советсен сйесĕнче паллашрăм. Унта Асхва йалĕнчен (халĕ Канаш р.) делегат пулса пынăччĕ епĕ.

Андрейева йулташ унчухне уйесри хĕрарăмсен организаторĕ пулса ĕçлетчĕ. Сйеса пынă хĕрарăм-делегатсене чи малтан вăл йышăнса илчĕ.

— Сйеса-и? Хăш вулăсран?

Йалт тĕплĕн ыйтса пĕлет. Вăл пирĕнпе çав тери йăвашшăн калаçать. Епĕр, хамăрпа сывăх çын калаçнине курса, йалта хамăр мĕнле ĕçлени çинчен каласа патăмăр.

— Епĕ сирĕн валли лайăх общежити хатĕрлесе хунăччĕ-ха,—терĕ те пире хăйпе пĕрле утма хушрĕ. Пире електричествăпа çутăлса тăракан тап-таса пӳрте илсе кĕрсе вырнаçтарчĕ.

Епĕр електричествă мĕнле çутатни çинчен ыйтусем пама пуçларăмăр. Вăл пире, халиччен електричествă курман скерсене, ун çинчен лайăх ăнлантарса пачĕ. Ĕлĕкхипе халăхк пурнăç çинчен, совет власĕ хĕрарăмсене панă правасем çинчен, пурнăç малала мĕнле пулмали çинчен, йалсенче мĕнле ĕçлемели çинчен каласа кăтартрĕ. Патефонпа йурлаттарса кăтартрĕ.

— Мĕнле йурă килĕшет?—ыйтать пирĕнтен. Епĕр килĕштернĕ йурăсене икшер хут йурлаттарать. Çĕнĕ йурăсем йурлама вĕрентрĕ.

Сйес хупăннă кун вечăрта тухса йурлама хор организацилерĕ. Епĕ те вăл вечăрта пĕрремĕш хут халăх умĕнче тухса йурласа патăм.

Епĕр, сйес пĕтсен, Зойа Ананйевнăран, тăван аннерен уйăрăлнă пек уйăрăлтăмăр. Вăл пире уйăрăлас умĕн тепĕр хут йалта мĕнле ĕçлемели çинчен каласа ăнлантарчĕ. Ăнланман ыйтусем пирки хăйĕнчен ыйтса пĕлме хушрĕ.

Уйессем пĕтсен, Андрейева йулташ Канаш районне ĕçлеме куçрĕ. Кунта та вăл хĕрарăмсемпе питĕ тăрăшса ĕçлетчĕ, вĕсене вĕренме пулăшатчĕ. 1927 çулта хĕрарăм-активсен курсне ирттерчĕ. Епĕ те пултăм унта. Пире, курсантăсене, хутсем, кĕнекесем, карандашсем пачĕç. Анчах епĕ, унччен шкулта 6 уйăх çеç вĕреннĕскер, нимĕн те пĕлместĕп.

— Есĕ вулама, çырма пĕлетĕн-и? — ыйтать манран Зойа Ананйевна.

— Нимĕн те пĕлместĕп,—тетĕп.

— Апла пулсан, калаçнисене лайăх итлесе лар,—терĕ мана.

Çакăн хыççăн хăйĕн хватерне чĕпсе, мана вулама, çырма вĕрентме пуçларĕ. Çырулăх мĕн иккенне çавăн чухне ăнланса илтĕм.

Андрейева йулташ пулăшнипех 1927 çулта комсомола кĕтĕм. Мана 1930 çулта милиционерсен курсне вĕренме йачĕç. Ун хыççăн районта пĕрремĕш хĕрарăм милиционер пулса ĕçлерĕм.

1935 çулта профсойуз работникĕсем хатĕрлекен шкула вĕренме йачĕç. Унта епĕ ăнсăртран ревматисăм тата ăшчик чирĕпе йăвăр чирлесе йалт пĕтсе карăм. Ун çинчен Зойа Ананйевна илтнĕ те, ман пата чупса пычĕ.

— Степанова йулташ, есĕ питĕ пĕтсе кайнă. Санăн сывалма курорта каймала, тет. Çакăн хыççăн курорта каймали путевкине те хăйех профсойуз организацисем урлă тупса пачĕ. Епĕ сывалса килтĕм. Çапла тăрăшать вăл çамрăк кадрсемшĕн.

Епĕ вăл пулăшнипех хута вĕрентĕм. Парти кандидатне кĕме тивĕçлĕ пултăм.

Андрейева, Зойа Ананйевна Совет Сойузĕн Аслă Советне депутата суйланма тивĕçлĕ.

Куславкка комбинатĕнчи техникла контроль пайĕн членĕ—**Д. Степанова.**

Националънăçсен Советне депутата суйлама палăртнă кандидат

Иван Василйевич Новиков

Çĕмĕрле суйлав округĕ № 505

Çĕмĕрле комбинатĕнчи тата „Большевик" заводри рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служăшчисем ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăçсен Совет депутатне суйлама кандидата Чăваш АСС Республикинчи Çĕмĕрлери суйлав округĕ тăрăх Новиков, Иван Василйевич йулташа—ПСК(б)П Çĕмĕрле Райкомĕн пĕрремĕш секретарне палăртрĕç.

Новиков И. В. йулташ 1924 çултанпа коммуниссен (большевиксен) партин членĕ. Вăл 1901 çулхи çентябĕрĕн 24-че Горький облаçĕнче, Работкинский районта. Слободской йалĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Новиков йулташ вырăс çынни.

Унăн ашшĕ-амăшĕсем йалта, çĕр ĕçĕпе пурнаççĕ, 1930 çултанпа колхозра тăраççĕ. Революциччен ашшĕ шыв транспортĕнче, пăрахутсем çинче матрос тата штурвалънăй пулса ĕçленĕ. Шыв транспортĕнче ашшĕ пĕтĕмпе 30 çул ытларах ĕçленĕ.

1915 çулта Новиков И. В. йулташ шыв транспăртне ĕçе кĕрет те, 1922 çулчен пăрахутсем çинче матрос пулса ĕçлет. 1922 çул вĕçĕнче Севастополе, Хура тинĕс флотне доброволец пулса кайать.

Новиков И. В. йулташ сакăр çула йахăн парти ĕçĕнче ĕçлет. 1925 ç. пуçласа 1928 çула çитиччен—ПСК(б)П Чулхула Укомĕн пропагандисĕ тата агитаципе пропагандă пай пуçлăхĕн заместителĕ, 1928 çултан пуçласа 1929 çулхи март уйăхне çитиччен—ПСК(б)П Безводнинский Волкомĕн секретарĕ, 1929 çулхи март уйăхĕпе 1929 çулхи ийуль уйăхĕ хушшинче—ПСК(б)П Чулхула Укомĕн бюро членĕ тата Агитаципе пропагандă пайĕн пуçлăхĕ, 1929 çулхи ийун уйăхĕпе 1930 çулхи çентабĕр уйăхĕ хушшинче ПСК(б)П Чулхула Окружкомĕн промышленнăç секторĕн пуçлăхĕ. МТС-сенче Политотделсем тунă хыççăн, 1932 çулта Новиков йулташа Горькири марксисăм-ленинисăм институтĕнче вĕреннĕ çĕртенех илеççĕ те Политотдела ĕçе йараççĕ. 1933 çулхи апрел уйăхĕпе 1934 çулхи апрел уйăхĕ хушшинче вăл Горький крайĕнчи Лыахово МТС политотдел начальникĕн заместителĕ, 1934 çулхи апрел уйăхĕпе 1935 çулхи феврал уйăхĕ хушшинче Чăваш АСС Республикинчи Вăрмар МТС-ĕнчи Политотдел начальникĕ пулса ĕçлет.

Новиков И. В. йулташ 1935 çулхи феврал уйăхĕпе 1937 çулхи апрел уйăхĕ хушшинче Ишлей Райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ. 1937 çулхи апрел уйăхĕнчен пуçласа халъхи вăхăта çитиччен ПСК(б)П Çĕмĕрле Райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулса ĕçлет.

Новиков И. В. йулташ партипе советăн йертсе пыракан органĕсене темиçе хут та суйланнă. Вăл ПСК(б)П Чулхула Укомĕн членĕ, ПСК(б)П Чулхула Окружкомĕн членĕн кандидачĕ, ПСК(б)П Лыахов, Вăрмар, Ишлей райкомĕсен членĕ пулнă. Халъхи вăхăтра ПСК(б)П Çĕмĕрле Райкомĕн тата ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн членĕнче тăрать.

Новиков йулташ Ленин—Сталин парти ĕçне пĕтĕм чĕререн парăнса туса пыракан хастарлă работник. Новиков йулташ политикă тĕлĕшĕнчен сăнаса пăхнă, социалисăмлă тăван çĕршыва çирĕплетессишĕн кĕрешекен, партин аслă çулйĕрне пурнăçа çирĕп кĕртсе пыракан, халăх тăшманĕсене хирĕç ывăна пĕлми кĕрешекен çын.

Новиков йулташ Аслă Совет депутачĕ пулма тивĕçлĕ

Епĕр, комбинатра ĕçлекенсем, ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăçсен Советне депутата суйлама парти райком секретарне И. В. Новиков йулташа кандидата палăртрăмăр. Новиков йулташ баллотировкăна тăма килĕшӳ пачĕ, округ суйлав комиççийĕ Новиков йулташ кандидатурине регистрацилерĕ.

Комбинатра ĕçлекенсем Новиков йулташа лайăх пĕлеççĕ, йурataççĕ. Вăл мĕнле ĕçлени, пирĕншĕн паллă. Кĕске вăхăт хушшинчех, партине лĕсевсе кĕнĕ халăх тăшманĕсене, вĕсене хӳтĕлекенсене тасатрĕ, парти организацисен ĕçне çирĕплетрĕ.

Епе Новиков йулташа кăçал, çуркуннерен пелетĕп. Унпа час-часах курса калаçнă. Чăвашсен Чрезвычайлă XI-мĕш сйесĕнче те унпа пĕрле пултăмăр. Ăçта курнă, çавăнта вăл манпа калаçать, мĕнле пуранни, ĕçлени çинчен ыйтса пĕлет. Пĕлмешшĕн çынна йатласса вăрçмаст, каласа ăнлан арать. Вăл мана кăçал вĕренме те пулăшрĕ. Халĕ акă епе, кăçхиве ĕçрен килсен парти шкулне вĕренме çӳретĕп. Калас пулать, Новиков йулташăн ĕç нумай пулин те, вăл мана, ытти манашкал çынсене вĕрентӳре те, ĕçре те пулăшать.

Новиков йулташ ĕçхалăхĕн пурнăçне лайăхлатассишĕн, телейлĕ те культурлă, пуйан пурнăç туса парассишĕн, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçленине лайăх пелетпĕр, çавăншăн ăна йуратат пăр. Çавăнпа декабĕрĕн 12-мĕшĕнче Аслă Совет депутачĕ пулма уншăн сасăлатпăр.

Çĕмĕрле комбинатĕнчи стахановка-коммунистка—**А. Чапрайева.**

ИВАН ВАСИЛЙЕВИЧ НОВИКОВ—ПСК(б)П Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ. Националънăçсен Советне депутата суйлама Çĕмĕрлери № 505 суйлав округĕнче регистрациленĕ.

* * *

Иван Василйевич çамрăклăхĕ

Иван Василйевич 1915-мĕш çулччен йалтан айакала тухса çӳремен. Хула пурнăçĕ çинчен çынсем урлă çеç пĕлнĕ. Унăн ашшĕ Атăл çинче матросра ĕçленĕ, вăл матроссен йăвăр пурнăçĕ çинчен каласа панă.

Килте вĕсем начар пурăннă. Тепĕр чухне çăкăр ыйтма килĕрен тухса кайма та лекнĕ. Мĕн калăн ĕнтĕ ĕлĕкхи хресченсен начар пурнăçĕ çинчен. Йалти кулаксем пусмăрласа пурăннă, урйадник-становойсем пырса налог, кулана тӳлеменшĕн пур пек вылъăх-чĕрлĕхе пуçтарса кайнă, т. ыт. те.

Йалта укçа тупма май килмен. Ăçтан тупас? Мĕн сутмала? Нушалă тата йăвăр пурнăç пирки Иван Василйевич 1915 çулта Атăл çинче çӳрекен пароход çине ĕçлеме кайать. Вăл ун чухне 14 çулхи ача пулнă. Паллах, 14 çулхи ачана пароход çинче ĕçлеме çăмăл пулман.

Иван Василйевич хăйĕн малтанхи пурнăçне лайăххах астăвать.

— Ун чухне епĕ матроссенчен чи çамрăкки, пĕчĕкки пулнă,—тесе каласа парать Иван Василйевич.—Çавăнпа та питĕ йăвăр пулнă мана. Ытти матроссем каннă вăхăтра кирек мĕн тумала, йатмала, йе кайса килмеле пулсан, тӳрех мана чуптаратчĕç. Итлемесен, хĕнетчĕç, хăшпĕр чухне ларса апат çиме те вăхăт çукчĕ. Ăçта ĕçлетĕн—çавăнтах ларса çийетĕн. Апат тип çăкăрпа шывсăр пуçне урăх нимех те пулман.

Иван Васйлйевичăн малтанхи пароходĕ „Ориноко" пулнă, çавăнта ĕçленĕ вăл. Ку пароходпа вылъăх-чĕрлĕхсем те тĕрлĕрен таварсем те илсе çӳренĕ. Вăл вылъăхсен вырăнĕсене шăлса, çуса тасатнă, багажсем йе тата урăх йапаласем йатнă çĕрте ĕçленĕ. Чи хăрушă, йăвăр ĕçĕ—пароход кайнă чухне урайсене çăвасси пулнă. Шăлапарĕ пысăккă пирки шыва йарсан кайала туртса кăлармa çав тери йăвăр пулнă.

Иван Василйевич уйăхне пĕтĕмпе те 12 тенкĕ çеç ĕçлесе илнĕ. Ку укçа тумланма мар, çиме те çитеймен. Выртсa тăмали вырăнсем пулман. Ытти матроссемпе пĕрлех нарă çине выртса çывăрнă, айа çири çĕтĕк-çатăк тумтире сарнă, шăналăк йе ытти йапалапа витĕнсе выртнă. Унăн пурнăçĕнче час-часах çакăн пек тĕслĕхсем пулкаланă:

...Кĕрхи кас çурçĕр варринче тухнă çил-тăвăл вăйлансах пынă. Кăптăр йенчен вĕрекен çил çурçĕреле куçнă. Вĕтĕртетсе çăвакан çăмăрĕ татах та вăйланнă. Çак вăхăтра Атăл шывĕ çине пăхсан тĕнче пĕтсе килнĕнех туйăннă. Сивĕ пулнă. „Ориноко" пароход çинчи матроссем пурте çывăрнă. Сасартăк Бункевич капитан (вăл нимĕç пулнă) анчах çывăрма выртнă 14 çулхи Иван патне пынă та, вăрçма пуçланă. „Есĕ кунта ытла лайăх çывăратăн, нуккă сана ĕç парам," тесе чышса йанă. Кайран çĕрĕпе çăмăр айĕнче таварсем пушаттарнă.

Акă тата тепре Иван Василйевич пыракан пароход, çурçĕр варринче путма пуçласан, виçĕ талăк хушши лăп курмасăр, ăна, пароход ăшне кĕрсе тулнă шыва уçлаттарнă. Çапах спасибă илтеймен.

Капитанпа йунашар ларса калаçма та май килмен. Йаланах вăл çилĕлĕ çӳренĕ. Матроссене йатпа йе хушаматпа мар „ей," тесе чĕннĕ. Иван Василйевича йаланах „ей, маленький матлеса", тесе кăшкăрнă.

Çапла ĕçленĕ Иван Василйевич 5 çул хушши Атăл çинче. Çак пилĕк çул хушшинче вăл пурнăç йепле иккенне лайăххах тавçăрса илнĕ. Вăл выçă та, сивĕ те курнă. Пĕрре кăна мар халсăрланса вилес патне çитнĕ. Çук, çапах вилĕме парăнман. Тем чул йăвăр пулин те ĕçленĕ.

Аслă Октябĕр çеç унăн çулне малала уçса пачĕ. 1920 çулта вăл Ленинла комсомол ретне кĕрет. Комсомол умĕнче тăракан задачăсене тӳррĕн пурнăçлама пуçлать, 1922 çулта матросра ĕçленĕ çĕртен Хура тинĕс çине доброволънă çар флотне кайать. 1923 çул вĕçнеле флотран, тавăрăнсан партипе совет шкулне вĕренме кĕрет. Калас пулать, Иван Василйевич 1923 çулччен ытти шкулсенче вĕренеймен. Матросра ĕçленĕ хушăрах хĕллехи вăхăтра йалта пуçламĕш шкулта çеç вĕреннĕ. Çавăн пек иртнĕ унăн çамрăклăхĕ.

Иван Василйевич Новиков чăн-чăн çирĕп большевик. Вăл ĕçхалăх пурнăçне татах та лайăхлатассишĕн, культурлă, савăнăçлă пурнăç туса парассишĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлет.

Çавăнпа та Çĕмĕрле суйлав округĕнчи рабочисемпе колхозниксем, служăшчисемпе вĕренекенсем Иван Васйлйевич Новиков йулташа ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăçсен Советне дупатата суйлама палăртрĕç.

Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче Аслă Совета суйланă кун Çĕмĕрле суйлав округĕнчи суйлавçăсем, хăйсем палăртнă кандидатшăн, Иван Василйевич Новиковшăн хăйсен сассисене пăраççĕ.

Хар. Лисин.

З. А. Андрейева йулташ суйлавçăсем патĕнче

Пилĕк çĕр суйлавçă ытла пухăнчĕç ноябĕрĕн 21-мĕшĕнче Строителсен клубĕнче пулса иртнĕ суйлав умĕнхи пухура. Шупашкар хулинчи 12-мĕш суйлав участокĕнче пурăнакан суйлавçăсем—рабочисем, инженерсем, техниксем, служăшчисем, вĕренекенсем тата килхуçи хĕрарăмĕсем Шупашкар округĕ тăрăх Сойуз Советне депутата суйлама тăратнă кандидатпа—Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком председателĕпе Зойа Ананйевна Андрейевăпа курса калаçрĕç. Çавăнпа пĕрлех Аслă Совета суйлама тăратнă кандидатсем В. П. Чкалов, А. И. Стецкий йулташсем çинчен сӳтсе йаврĕç.

Округри суйлав комиççинчи доверенăй Лудмила Грачова хăйĕн сăмахĕнче çапла каларĕ:

— Епĕр Аслă Совета депутата суйлама тăратнă кандидатсем çинчен сӳтсе йавма пухăнтăмăр. Аслă Совета Сталинла Конституци тăрăх суйлассин вăл—вилесĕр пысăк çĕнтерӳ, вĕçĕмсĕр савăнăç. Пирĕн Совет çĕршывĕнче чи кĕске — 7 сехетлĕ ĕç кунĕ. Пирĕн совет çĕршывĕнче кашни граждăнăн ĕçлев, вĕренӳ тата кану прависем пур. Вĕсене пире коммуниссен партине пачĕ. Çавăнпа епĕр Аслă Совета Ленинпа Сталин партине чĕререн парăнса ĕçлекенсене суйлатпăр.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем хăйсен пухăвĕсенче Аслă Совета депутата суйлама çĕршывăн паттăр ывăл-хĕрĕсене кандидата тăратрĕç. Вĕсенчен пĕри халĕ Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком председателĕ пулса ĕçлекен Зойа Андрейева. Зойа Андрейева фельдшер çемйинче çуралнă. 12 çул ытла ĕнтĕ вăл совет органĕсенче ĕçлет. Епĕ хам та Андрейева патĕнче пĕрех хут çеç пулман. Вăл халăхшăн ĕçлет. Хăйĕн ĕçĕнче коммуниссен партине чĕререн парăнса ĕçленине кăтартрĕ. Çавăнпа епĕр ăна Сойуз Советне депутата суйлама кандидата тăратрăмăр. Вăл Сойуз Советĕнче депутат пулма тивĕçлĕ çын. Йулташсем, епĕ сире Зойа Андрейевăшăн сасăлама чĕнетĕп.

— Сталинла Конституци пире—çамрăксене пур правасем те пачĕ,—тет агитатор Т. Йегорова йулташ.—Пирĕн умра халĕ вĕренме те, ĕçлеме те çул уçă. Пăхăр-ха, капиталисăмла патшалăхсенчи çамрăксем мĕнле пурăннине. Унта çамрăксем йăвăр, хĕсĕк пурнăçра тертленеççĕ. Вĕсен пирĕн пек государствă ĕçĕнче хутшăнса ĕçлеме правасем çук. Хĕрарăмсен пурнăçĕ тата та йăвăр.

Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче епĕр Аслă Совета суйлама тухатпăр. Аслă Совета суйламали кандидатсен шутĕнче Совет Сойузĕн Геройĕ Чкалов, Алексей Иванович Стецкий тата З. А. Андрейева йулташсем. Вĕсем Совет çĕршывĕн чаплă ывăл-хĕрĕсем. Епĕр çамрăксем Чкалов, Стецкий, Андрейева йулташсемшĕн сасăлатпăр.

— Суйлав кунĕ çывхарса килет,—тет стахановец Истоцкий йулташ.—Епĕ Аслă Совета депутата суйлама тăратнă кандидатсене ырланипе пĕрлех, суйлав кунне производствăра пысăк çитĕнӳсем тупипе кĕтсе илме пулатăп. Урăхла пулма та пултараймаст. Суйлав кунĕ маншăн хамăн ĕмĕрти чи савăнăçлă кун.

Трибунă çине рабочи Тихомиров йулташ тухать. Вăл хăйĕн сăмахне Сталин йулташа саламланипе пуçлать:

— Епĕр-пайан Аслă Совета суйлама тăратнă кандидатсене Андрейева, Чкалов тата Стецкий йулташсем çинчен сӳтсе йавма пухăнтăмăр. Епĕ рабочи. Эпĕ [illegible] пулсан епĕ кунашкал суйлав çинчен ĕмĕтленме те пултарайман. Халĕ пăхăрха. Епĕ—рабочи Аслă Совета суйлама тăратнă кандидатсем çинчен калаçатăп. Хамăн малашнехи телейлĕ пурнăçшăн кĕрешекенсене Аслă Совета суйлатăп. Мĕнле савăнас мар çакăн пек чухне. Епĕ, Андрейева, Чкалов, Стецкий йулташсемшĕн сасăлатăп. Вĕсем пирĕн шанчăка тивĕçлĕн пурнăçа кĕртесси çине шанатăп.

Пухура З. А. Андрейева тухса каларĕ:

— Йулташсем, декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пирĕншĕн савăнăçларан та савăнăçлă кун пулса тăрать. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче епĕр пирвайхи хут хамăрăн Аслă Совета Сталинла Конституци тăрăх суйлатпăр.

Пирĕн Совет çĕршывĕ çирĕм çул хушшинче вăйлă державă пулса тăчĕ. Совет Сойузĕпе пĕрлех пирĕн Чăваш республикĕ те ӳссе пырать. Патша самани вăхăтĕнче вак-тĕвек заводсем пулнă çĕрте пысăк комбинатсем ӳссе ларчĕç. Ĕçхалăхĕн культурлăхĕ ӳссех пырать. Епĕр вĕсене коммуниссен партийĕ, Сталин йулташ йертсе пынипе турăмăр.

Шупашкар округĕнчи ĕççыннисем мана Сойуз Советне депутата суйлама кандидата палăртса ман çине пысăк шанчăк хучĕç, пысăк чис турĕç. Епĕ вăл чиса çирĕппĕн алăра тытса тăма пулатăп. Вăйа шеллемесĕр Ленинпа Сталин партишĕн кĕрешме пулатăп.

Пуху пĕр сасăпах суйлав кунĕнче хăйсен сассисене тивĕçлĕ кандидатсемшĕн В. П. Чкаловшăн, А. И. Стецкийшăн, З. А. Андрейевашăн пама решени йышăнчĕ.

Вăл йаланах массăпа пĕрле

Епĕ И. Новиков йулташа 1934 çултанпа пĕлетĕп. Вăл ун чухне Вăрмарти политотдел начальникĕнче ĕçлеччĕ. Епĕ Карăк çырминче вулав çурт пуçлăхĕнче. Сахал мар унпа курса калаçнă. Йала пырсанах колхоз ĕçĕ çинчен колхозниксенчен ыйтса пĕлеччĕ. Пĕр-пĕр çитменлĕх тупăнсан, вĕçне çиттермесĕр те пăрахмаст. Акă пирĕн йалти пуп тавраш ĕçсем совет власне хирĕç агитаци сарма пуçларĕç. Новиков йулташ çавна пĕлсенех йала пырса айăплисене тупрĕ, кайран ответ тыттарчĕç. Çавăн пекех тата хаçат çине, кулак ывăлĕ улма çĕртсе йани çинчен статйа çапăнса тухнăччĕ. Ку ыйтупа та Новиков Й. килсе тĕрĕслерĕ, айăплисене судпа айăпларĕç, т. ыт. те.

Халĕ [illegible] итлемесĕр тăрас килмест. Мĕн хушать, çавна часах пурнăçлас килет.

Новиков йулташ пулăшнипех пирĕн колхоз малала кайрĕ. Колхозниксем халĕ те ăна асăнаççĕ, ырлаççĕ.

Иртнĕ çулта Çĕмĕрлене килтĕм. Халĕ „Большевик" заводра ĕçлетĕп.

Манăн парти райкомне каймала пулчĕ. Новиков йулташ мана питĕ ăшшăн кĕтсе илчĕ. Йулташпа калаçнă пек епĕ унпа нумайччен калаçрăм ыйтса пĕлтĕм. Вăл пурне те тĕплĕн, васкамасăр каласа пачĕ. Ытти чухне те, кирек ăçта курсан та калаçать. Ăна епĕ кăна мар, пĕтĕм „Большевик" заводра ĕçлекенсем йурataççĕ. Çавăнпа та епĕр ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн депутачĕ пулма И. Новиков йулташшăн сасăлатпăр.

[illegible] **[illegible]**

Националљнăçсен Совѣтне депутата суйлама палăртнă кандидат

Ољга Тихоновна Харитонова

Патăрйел суйлав округĕ № 502

Патăрйел районĕнчи Шмидт йачĕпе тăракан колхозри колхозниксем тата Патăрйел районĕнчи коммунисла организаци Националљнăçсен Совѣтне депутата суйлама Пĕтĕмсойузлă Коммунистсен (болљшевиксен) Парти членне Ољга Тихоновна Харитонова йулташа кандидата тăратрĕç.

Ољга Тихоновна Харитонова 1900 çулта ийулĕн 20-мĕшĕнче, Патăрйел районĕнчи Кĕçĕн Кипеç йалĕнче, чухăн хресчен семйинче çуралнă. Çиччĕттисĕр, 6 аршăнлă пўрт вĕсен пĕртеппĕр „пуйанлăх" пулнă. Ољга Тихоновна ашшĕ пĕтĕм ĕмĕрне батракра çўресе иртернĕ.

Ољга Тихоновнăн ача чухнехи пурнăçĕ савăнăçлă пулман. Чухăн пурнăç хурлăхне вăл ачалах пĕлнĕ.

Ољга Тихоновнана ашшĕ-амăшĕ çав тери вĕрентесшĕн пулнă. 1915 çулта вăл Йелчĕкри двухкласнăй шкулран вĕренсе тухат.

Малала ăçта кайас? Ољга Тихоновнана хулара вĕрентме ашшĕ-амăшĕн укçа пулман. Вара вăл хăйне валљли хăй тĕллĕн çул тупма шутлат. 1915 çулта шартлама сивĕре вăл телей шыраса Хусана кайат. Хула ăна сиввĕн йышăнат. Наңкăра пурăнмала пулат—нумай нуша курма тиват. Хусанта икĕ çул хушши çав тери йăвăр условисенче пурăнса Ољга Тихоновна машинопис курсне пĕтерет тата екстерн йĕркипе гимназин тăватă класĕшĕн екзамен тытат.

1917 çулта тăван йалне таврăнат, хăйсен йалĕнчи пуçламĕш шкулта учителница-практикантка пулса ĕçлет. Кунта унăн обшчествăлă пурнăçĕ пуçланат. Комсомола кĕрсен вăл комсомол ĕçĕнче активлă ĕçлет, ăна темиçе хутчен комсомол Укомне суйлаççĕ. 1924 çултанпа Ољга Тихоновна Пĕтĕмсойузлă Коммунистсен (болљшевиксен) Парти членĕ. Ољга Тихоновна хăйĕн пĕтĕм пурнăçне ĕлĕк кайа йулнă чăваш халăхне çутта кăларас ĕçе парат.

Палти рйадовой учителница пулса, Ољга Тихоновна пролетари револљуционерĕн хастарлăхĕпе çынсене çĕнĕ кулљтурăлă пурнăçпа пурăнма вĕрентет, трахомна кĕрешет, чăваш ачисене пурне те шкула çўретессишĕн кĕрешет. Унăн хастарлăхĕпе Исампай йалсоветĕнче чи малтан, 1929 çултах, пурне те вĕрентес ĕçе тытăннă.

1928 çулта Ољга Тихоновна колхоз организацилеме актив хатĕрлет, 1929 ç. Кĕçĕн Кипеç вăл тăрăшнипе колхоз тунă.

1932 çулта Ољга Тихоновнана Патăрйел районĕнчи Хирти Сĕнтĕрти туллимар вăтам шкул директорĕ тăваççĕ. Республикăра Ољга Тихоновнана унăн шкулĕ вĕренĕве лайăх организацилеине, педагогикă ăсталăхĕпе чапа тухрĕ.

Кăçал Ољга Тихоновна Кремљре пулчĕ. Вăл Чăваш республикин делегацинче пулса РСФСР Совѣтсен 17-мĕш çийĕсне саламларĕ.

Ĕлĕкхи ылханлă пурнăçăн йăварлăхне тўссе ўснĕ Ољга Тихоновна çĕнĕ пурнăçăн строителствинче пĕтĕм чунне парса ĕçлет.

—o*o—

Тивĕçлĕ кандидат

I.

... Çирĕм çул кайала вĕренес, етем шутне кĕрсе обшчествăшăн усăлă çын пулас шухăш чухăн ачисемшĕн ĕмĕтре çеç йулнă. Чухăнта чуралă пурнăçра нуша, хурлăх тўсме, тарçăра хуçалса çĕмĕрĕлме çеç чухăнсен ачисемшĕн çул уçă пулнă вăл вăхăтра. Темĕн тери вĕренес тесен те, чухăнсен ачисен асларах шкул алăкне уçса кĕме вăй çитмен.

Халљхи, тĕпренех улăшса çĕнелнĕ Сталинла тапхăрти çамрăксемшĕн—ирĕклĕхпе телейлĕх тата савăнăç çулĕ уçă. Сталинла Конституци пуриншĕн те вĕренмели, ĕçлемели, канмали пĕртан правасем туса панă. Вĕрен—ĕçле, ĕçле те вĕрен, ан ўркен кăна. Ахаљрен мар çав:

— Иртнĕ, инçене йулнă ылханлă йатă пурнăçне аса илсессĕн манăн кăмăлам хуçалат,—тет Ољга Тихоновна.

Йалти шкултан вĕренсе тухсан татах вĕренес шухăш Ољгана канăç паман. Вăл кĕркуннехи кичем те сивĕ кунсенче çуранлă мĕнлĕ Чĕмпĕр йенеле çул тытнă. Чĕмпĕре (халљхи Улйановск) çитсе чăвашсен шкулне кĕме испытанине тăрсан:

— Есĕр вĕренме пултараймастăр,—тесе Ољгана таврса йанă.

Вĕренес, учителница пулас ĕмĕт канăç паман. Ољга сутăçăсен лавĕсем çине ларкаласа Хусана кайнă. Вĕренмеле, анчах укçа кирлĕ. Ирĕксĕрех п р пуйан патне ңаңкăва кĕнĕ. Хуçа Ољгана икĕ сехет хушши çеç вĕренме ирĕк панă. Тарçăри асапла, пăтаклă чура пурнăçĕ Ољгана часах сĕм куççăра хăварнă. Вăл икĕ ерне çутçанталăк курмасăр выртнă. Игнатйев хуçа ĕçленĕшĕн тесе „хĕрхенсе" панă 15 пус укçине те хуçан хытă кукар арăм тепĕр куннех Ољгаран тытса илнĕ.

Инкеке йулнă Ољган вĕренесси пĕтсе ларнă, вăл каллех тарçăра пурăнакан ашшĕ патне таврăннă. Вĕренес ĕмĕте çапах çухатман.

1921 çулта Ољга Тихоновна Тетĕшри шкула пĕтерсе тухса халăх учителници пулса тăрат.

II.

1918 çул...

Çĕршыва револљуци çулăмĕ хыпса илнĕ. Клас кĕрешĕвĕн хĕрўлĕ кувĕсем. Ољгапа унăн шăлнĕ Варфоломи Тетешре атă çĕлекен патĕнче кĕрĕшсе ĕçлесе шкулта вĕренеççĕ. Çутă—краçин тавраш çук: кантра, курăс хуппи çунтаркаласа уроксене хатĕрленеççĕ.

Çак çул Ољга Тихоновна комсомол ретне кĕрет. Çакăнтан ентĕ Ољгăн обшчествă ĕçне хутшăнса ĕçлесси, хăйĕн тĕллевне пурнăçласси пуçланат.

1920—1921 çулсем...

Граждăн вăрçин фрончĕсенче тупă йĕтрисем шăхăрма пăрахманха. Йулашки, татăкла çапăçусем пыраççĕ. Вăл обшчествăлă ĕçри активисткă: вулăсра женорг, ачасен сачĕн пуçлăхĕ, пионерсен вожатăйĕ, комсомол йачейкин секретарĕ тата политпросвет организатор пулса ĕçлет. Хăйĕн çамрăк вăйхалне шеллемесĕр, йаланах малти ретсенче пулса, пуçарнă ĕçе вĕçне çитеричченех кĕрешсе пырат. Ољга Тихоновна 1923 çулта парти кандидатне кĕрет, тата тепĕр çултан парти членне куçат.

Ољга парти ĕçне пĕтĕм вăйне парат. Вăл вунă йала пĕрлештерсе тăракан парти йачейкин секретарĕ пулсă, партишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет: тырпул хатĕрлес ĕçре те, халăх сывлăхне упрассипе те, халăха çутта кăларас ĕçре те Харитонова йулташ малти ретре кĕрешсе пырат. Чăваш халăхĕн ĕмĕрхи инкеклĕ чирне—трахома пĕтерессипе хастарлăн ĕçленĕшĕн Сывлăх халăх комиссариачĕ Ољга Харитонова йулташа грамота тата укçа парса парнелет.

III.

Ољга Тихоновна обшчествăлă ĕçсенче йаланах активпа таччăн çыхăнса ĕçлене. Кулаксемпе кĕрешме йалти чухăнсене хăй тавра пĕрлештерсе çирĕп актив хатĕрлет.

1929 çулта Ољга Харитонова хăйĕн йаленче 9 килпе Патăрйел районĕнче чи пирвай колхоз организацилет. „Трактор" колхоз йĕркелĕ ĕçлесе, аталанса пынине кура таврари йалсенче те колхозсем шăта-шăта тухнă.

1930—1931 çулсем. Колхозсем тунă май, ĕçхалăхĕн йунне ĕмĕртенпе ĕçсе пурăннă кулаксене тĕпĕ тымарĕпех кăкласа пĕтерес ĕçре Харитонова йулташ кунĕн çĕрĕн, çывăрмасăр, сывлăхне шеллемесĕр кĕрешет.

Ољга Тихоновнăн тĕрĕслĕхне йаланах шанаççĕ. Ăна йалсоветпе колхозăн ревизи комиççийĕнче йертсе пыма суйлаççĕ. Кунта вăл сахал мар кулакла елементсен ирсĕр ĕçĕсене, социалисăмла обшчествăн пурлăхĕсене çаратакансене палăртса, вĕсене вăхăтра çапса салатса пырат. Харитонова йулташ кулаксене чĕтретекен, вĕсене тĕп туса пыракан—кулаксемшĕн чи хайар тăшман пулнă. Кулаксем ăна йаланах шăл хăйранă. Кĕрхи тĕттĕм çĕрсенче кўршĕ колхозсенчен ĕçлесе таврăннă чухне тăшман обрезĕнчен тухнă каскăн пуљă пĕрре кăна мар Ољга умĕнчен шăхăрса иртнĕ.

1934 çул .. Нойаберĕн кичем, тĕттĕм каçĕсем. Кăнтăр кунĕнче ĕçлесе ĕшеннĕ Харитоновсен çемйи тарăн ыйхăра пулнă. Тăшман аллисем хăйĕн тискер ĕçне тунă. Сасартăк Ољгасен çуртне вут хыпса илнĕ.

Тăшман хăйĕн сĕмсĕр ĕçне чейелĕн тунă. Вăл хуралçă халăха систересрен хурал чанесене татса хунă. Ољгасен çемйи мĕн пурĕ те икĕ çăкарпа çеç вутран тухнă.

Тăшманăн путсĕр те сĕмсĕр ĕçе халăхăн колхозсемшĕн çĕкленне хумне, Ољга Тихоновнăн колхозсемшĕн, кулаксене тĕп тăвассишĕн тапса вĕрекен вăйхалне те,—тытса чараймăн. Пурнăç аванланнă, колхозсем вăйланса çирĕпленсе пынă. Ољга Тихоновна йаланах малти ретре пулса кĕрешў хĕçпăшалне пĕрмайах çивĕч тытса пынă.

IV.

1937 çулти йанварĕн 18-мĕшĕ—Ољга Тихоновнăшăн ĕмĕрте манми кун пулса йулнă. Çак кун вăл Кремљре РСФСР Конституцине йышăнна çĕрте пулнă. Çакă—тĕнчери чи демократилĕ Конституцин статйисенче Ољга Тихоновна вăйхал хурса тунă çĕнтерўсем те пур.

Телейлĕ те савăнăçлă пурнăçри чăваш ĕçхалăхĕ Аслă Совета суйлама Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйхăватне хурса кĕрешекен çынсене кандидата тăратат. Вĕсем пуринпе пĕрлех:

— Епĕр чăваш халăхĕн мухтавлă хĕрĕшĕн, çирĕп болљшевичкă Ољга Тихоновна Харитоновăшăн сасăлатпăр теççĕ.

Н. Пушкин.
Ф. Майков.

ОЉГА ТИХОНОВНА ХАРИТОНОВА——Патăрйел районĕнчи Хирти Сĕнтĕрти Вăтам шкулти учителницă, Националљнăçсен Совѣтне депутата суйлама Патăрйелти № 502 суйлав округĕнче регистрациленĕ.

* * *

Чи лайăх учителсенчен пĕри

Пĕлтĕр манăн О. Т. Харитонова йулташ директорта ĕçлекен Хирти Сĕнтĕрти кĕçĕн вăтам шкул ĕçĕпе паллашмала пулчĕ. Шкула пырса кĕрсенех таса классем, вĕсенче ним шавламасăр шăппăн вĕренсе ларакан кулљтурлă шкул ачисем питĕ савăнтарса йачĕç. Шкул ĕçĕпе тĕплĕ паллашсан епĕр ачасем шкула пĕри те пĕр кун сиктермесĕр çўренине пĕлтĕмĕр. Харитонова йулташ ача ашшĕсемпе тĕплĕ каласса, вĕсене ăнлантарса парса ачасем прогул тунине пĕтĕмпех пĕтернĕ.

Тата ачасем вĕренўре ĕлкĕрсе пырасси те питĕ лайăх, нумай классем ăмăртса ĕçлесе вĕренў çулне лайăх паллăсемпе пĕтернĕ.

Мана, шкулта ĕçлекенскере, Ољга Тихоновна ĕç меслечĕсем питĕ усăлă пулчĕç. Епĕ те хамăр шкулта Хирти Сĕнтĕрти кĕçĕн вăтам шкулти пек веренў ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе ĕçлеме пуçларăм Ку шкулпа тата çирĕп çыхăнса ĕçлес шутпа епĕр кăçалхи вĕренў çулĕнче ăмăртăва тухрăмăр. Халљхи вăхăтра епĕр час-часах Хирти Сĕнтĕр шкулĕн лайăх ĕç опычĕсемпе паллашса хамăрăн Нĕркеçри кĕçĕн вăтам шкул ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе пур учителсем те тăрăшса ĕçлетпĕр. Ољга Тихоновна хăйĕн усăлă канашĕсемпе пире йаланах пулăшса пырат. Вăл чăн-чăнах ĕçре пиçсе ўснĕ чи лайăх учителсенчен пĕри. Çавăнпа та епĕр ăна Националљнăçсен Совѣтне суйлама пĕр сасăпа сасăлатпăр.

Сурскайа В. Н.

Нĕркеçри кĕçĕн вăтам шкул директорĕ.

—o*o—

Пирĕн хисеплĕ çын

Револљуциччен епĕр мунча пек пўртре высăлă тутăлă пурăннă. Револљуци пулсан та колхоз тăвиччен çителĕклĕ пурнăçпа пурăнса курайман. 1929 çулта йалта колхоз организацилесен Харитонова йулташ тĕплĕ ăнлантарса панипе епĕр колхоза кĕтĕмĕр.

Халљ епĕр таса, çĕнĕ çуртра, тутă та кулљтурлă пурнăçпа савăнса пурăнатпăр. Пирĕн çăкăр-тавар, сĕт-çу йаланах çителĕклĕ. Колхоза кĕрсенех епĕ 4 çул хушши конюхра ĕçлерĕм. Колхозра тăрăшса ĕçлени манăн çемйене пуйан пурнăç çулĕ çине илсе тухрĕ. Кăçал колхозра ĕçлесе 600 ĕçкунĕ турăмăр. Вăл ĕçкунĕсемшĕн илекен тырă пире тăранса пурăнма та, тумланма та, выљăх-чĕрлĕх уйрама та çитет. Манăн виçĕ ача шкулсенче вĕренеççĕ. Епĕ хам та кĕнеке, хаçат-журнал вуласа кулљтурлăха ўстерсех пыратăп. Хамăр пĕлĕве ўстерес ĕçре пире йаланах Ољга Тихоновна Харитонова пулăшса пырат. Халљ Сталин саманинче пурнăç питĕ лайăх. Пирĕн йуратнă çулпуçĕ Сталин йулташ телейлĕ пурнăç туса панăшăн епĕр чĕререн савăнатпăр. Çавăнпа та ĕнтĕ халĕ Сталин ĕçĕшĕн чĕререн парăнса ĕçленĕ, пире, ĕлĕкхи чухăнсене нумай пулăшна Харитонова йулташа Аслă Совета суйлама епĕр пĕр харăс сасăлатпăр.

„Трактор" колхоз членĕ—
Куçмин Илле.

—o*o—

Епĕр çемйипех О. Т. Харитоновăшăн сасăлатпăр

Епĕ 45 çула çитсе те халљхи пек лайăх пурнăç курман. Ĕлĕкхи асаплă пурнăçа аса илсен халљ чĕре ыратсах кайат. Епĕ хамăн çамрăк емĕре тарçăра, кĕтўçре, бурлакра ўресе иртернĕ. Унчух манăн ачасем, хам та нихçан та тăраниччен çăкăр çисе курман. Пирĕн çире пĕр питĕ тумтир пулман.

19 9 çулта пирĕн йалта О. Т. Харитонова пуçарнипе „Трактор" йатлă колхоз организацилерĕç. Ољга Тихоновна епĕр чухăн пурăннине кура пирĕн пата киле пырсах колхоза кĕресси çинчен темиçе хут та ăнлантарса пачĕ.

— Есĕр колхоза кĕрсен çеç чăнчăн лайăх пурнăç çулне тупăр,—тетчĕ вăл. Хăй ăнлантарнине хаçат вуласа, Ленинпа Сталин аслă учителсем вĕрентнĕ сăмахсемпе çирĕплетчĕ.

Епĕр Ољга Тихоновна сăмахне ĕненсе çемйипех колхоза кĕтĕмĕр Колхоза кĕнĕренпе чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Çак вăхăтра епĕ ĕлĕкхи мунча пек пўрт вырăнне пысăк пўрт лартрăм, ене туйантăм тата ытти выљăх-чĕрлĕх усратăп. Кăçал епĕр виççĕр пăта йахăн теш тырă илет пĕр. Халљ епĕр пурте тутă, пирĕн çи-пуççем те çирĕп. Çавăнпа та ĕнтĕ епĕр Ољга Тихоновнана çемйипех чĕререн тав тăватпăр, ăна Националљнăçсен Совѣтне суйлама сасăлама хатĕрленетпĕр.

Волков Федор.

Кипеçри „Трактор" колхоз.

—o*o—

Халăхшăн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлетĕп

О. Йу. Шмидт йачĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсем Патăрйел суйлав округĕнчен ССР Сойузĕн Националљнăçсен Совѣтне депутата суйлама Хирти Сĕнтĕрти тулли мар вăтам шкулра верентекен Ољга Тихоновна Харитонова йулташа палăртрĕç.

Вăл ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн депутачĕ пулма тивĕçлĕ çын. Вăл çамрăкранпах, хăй 17 çулта чухнех комсомола кĕрсе совет влаçĕ ĕçĕшĕн тăрăшса ĕçлеме тытăннă. 1924 çулта вăл парти ретне кĕрсе партипе совет влаçĕн ĕçĕсемшĕн тата активлăн кĕрешме тытăнчĕ.

1928—29 çулсенче Хирти-Сĕнтĕр, Нĕркеç тата Çĕрпў йалсоветсенчи чухăнсемпе батраксене тата вăтам хресченсемпе пĕрле пулса, патшалăха тырă хатĕрлессине хирĕç тăнă кулаксемпе хытă кĕрешрĕ. Вăл тăрăшнипех 1929 çулта çуркунне Кипеçри 9 хуçалăх пĕрлешсе колхоз организацилерĕç. Халĕ Кипеçри колхозра 61 хуçалăх тăраççĕ. Вăл Кипеçре колхоз организациленипе чарăнса тăмарĕ, кўршĕри йалсенче колхозсем тăвас тĕлĕшпе нумай ĕçлерĕ.

Учителница пулса ĕçлевĕ вăхăтрах хăйĕн пĕлўлĕхне хăпартса пырат. Пединститутра заочно вĕренет. 1937 çулта çулла пединститутăн 2-мĕш курсне пĕтерсе 3-мĕш курсне куçрĕ. Унăн шкулĕнче лайăх йĕрке. Вĕренекен ачасен пĕлўлĕхĕ те лайăх.

Ољга Тихоновна Харитоновăна ССР Сойузĕн Националљнăçсен Совѣтне депутат суйлљмали шанчăклă кандидат тесе шутлатпăр.

Бригадир Лукйанов П.

Государствă умĕнчи обйазателствăсене тултарассишĕн тăрăшмала

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн суйлавĕ çывхарнă май колхозсенче государствă умĕнчи обйазателствăсене тултарни паллă выран йышăнат. Йелчĕк районĕнчи хăшпĕр колхозсемпе уйрăм хуçалăхсем çак задачăна ăнланса илнĕ. Аслă Йелчĕкри Ленин йачĕпе тăракан колхоз государствăна чи паха сĕс хатĕрлесе парассипе районра малти вырăнта тăрат. Кашни гектартан 7,12 центнер сĕс илнĕ. Государтвана памалли сĕсе лайăх тасатса 5-мĕш тата 6-мĕш номĕрсемпе пана.

Çавăн пекех, государствăна сĕс парас плана Акчеленчи Тимирйазев йачĕпе тăракан колхоз 117 процент, „Красный восток" колхоз—100 процент, „Ким" колхоз—100 процент тултарнă. Пайанхи куна çитсе те асăнна колхозсем çеç хăйсен планĕсене тултарни Йелчĕк районĕшĕн пысăк çитменлĕх. Кăçал, сталинла тырпул тухăçĕ туса илнĕ, уйрăмăнах тата кĕрхи кунсем уйар тăнă, государствă умĕнчи обйазателствăсене кĕске вăхăтрах тултарма пур условисем те пур. Анчах çакна Йелчĕк райĕçтăвкомĕ те, районри йалсоветсем те, хатĕрлў комитечĕн районри уполномоченнăйĕн инструкторĕсем те тепĕр ăнланса илсе, унпа усă курман. Çаван пиркийех ентĕ Блљухер йачĕпе тăракан колхоз „Новый путь", „Красные Темяши" тата „Путь Ленина" колхозсем государствăна пĕр килограм та сĕс паман.

Государствăна çĕрулми тăратас ĕç татах та йапăх пырат темеле. Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз—63 процент, „Красный Часовой"—43 процент кăна тултарнă. „Çĕнĕ Тўскел" колхоз пĕр килограм та паман.

Кĕр кунĕсем питĕ лайăх, уйар тăраççĕ. Çак çитменлĕхсене пĕтерме пур майсем те пур. Пĕтĕм вăйа хурса суйлав кунĕ çитнĕ тĕле государствă умĕнчи обйазателствăсене тултарассишĕн тăрăшмала.

К. Воробйов.

—◆ o ◆—

МТС директорĕсен канашлăвĕ

Нойаберĕн 20-21-мĕшсенче машинпа трактор станци директорĕсен канашлăвĕ пулса иртре. Канашлура пĕр ыйту тăчĕ—тракторсене йусас ĕç йепле пыни çинчен. Тухса калакансем пурте пĕр шухăшла пулнă пек, тракторсене йусама мастерскойсем хатĕр мар, запаслă чăссем çитмеççĕ, бабит çук, станоксем çитмеççĕ, мастерскойсенче çутă çуккипе кĕрхи кĕске кунĕнче 4 сехетрен ытла ĕçлеме май çук, теççĕ.

Тĕлĕнмеле, ытла та тĕлĕнмеле. Чăваш Ĕçтăвакан Тĕп Комитет октаберĕн 31-мĕшĕнче тракторсене 1938 çулти март уйăхĕччен пĕтĕмпех йусаса пĕтермеле, тесе йышăнчĕ. Унтанпа вăхăт чылай иртрĕ. Анчах çак ĕç ку таранччен те вырăнтан тапранман. Паллах, ку ĕçре пуринчен ытла Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ айăплă, унпа пĕрлех МТС директорĕсене те айăпламасăр хăварма мар. Ку таранччен тракторсене йусама мастерскойсем хатĕр мар, запаслă чăссем çук тесе ларни вăл тĕрĕс шухăш мар. Тракторсене йусама лайăх хатĕрленсе çитме пур майсем те пулнă.

Пуринчен ытла Селхозснабжени пуçлăхĕ Пинт йулташ сăмахĕ тĕлĕнтерчĕ. Унăн сăмахĕсенчен—тракторсемпе йалхуçалăх машинĕсене йусама кирлĕ тимĕр, бабит тата ытти кирлĕ хатĕрсем çук, пулма та пултараймаççĕ пек тухат. Кун пек йурăхсăр шухăша канашлура сивлени пулмарĕ.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн машинă техникă пайĕнче ĕçлекен Андрейев инженер тракторсене йусама чăрмантарса пыракан тата тракторсене йусанă çĕрте сăтăр тăвакансем пурри çиннен каларĕ, анчах çав сăтăр тăвакансен йачĕсене асăнма темшĕн имевчĕ.

Машинпа трактор станцисем кăçалхи çул ытти çулсенчен ытларах краççин, лекроин тата ытти горючисем çителĕксĕррипе аптраççĕ. Горючисем çителĕксĕррипе тракторсем темиçе кун, темиçе ерне хушши ĕçлемесĕр ларнисем пулнă. Анчах çав хушăрах çак çитменлĕхсене пĕтерме „Нефтебаза" нимĕн те туман. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ те „Нефтебаза" вăл пире пăхăнакан организаци мар тенипех иртерет.

Машинăпа трактор станцисем валљли кадрсем хатĕрлес ĕç калама çук йапăх пырат. Канашри механикă шкулĕнче нойабĕр уйăхĕнче занятисем пуçланмала пулнă пулсан, ку таранччен вĕренекенсене те пухса çитерейман. Бригадирсен курсĕнче 150 çын пулмала, 33 çынна çитернĕ, анчах вĕсем те тарса пĕтнĕ, тет шкул директорĕ Степанов йулташ. Шкул директорĕ Çĕрĕç Халăх Комисариатĕнчен распорйаженисем кĕтсе ларса, хăй йенчен нимĕнле мерă та йышăнма шутламан.

Тракторсене йусама кирлĕ мерăсене кĕске вăхăтра йышăнса, пур çитменлĕхсене пĕтермеле.

Йусаса кăларнă тракторсене директор, бригадир тата трактор патне çирĕплетнĕ кашни тракторист лайăх пăхса тĕрĕслесе йышăнмала. Тракторсене йусакан бригадăсемпе уйрăм рабочисем хушшинче социалисăмла ăмăртупа стахановла йухăма анлăн сарса, февраљ уйăхĕ çитнĕ тĕле пур тракторсемпе йалхуçалăх машинĕсене йусаса çитермеле.

—◆ o ◆—

Профсойуз комитечĕ обшчествăлă инспектăрсемпе ĕçлемест

ÇĔМĔРЛЕ („Чăваш Коммунĕ" корр.). Йавăççем каскалакан комбинатра раобчисен ĕçне, сывлăхне сыхлас ыйтусемпе обшчествăлă инспектăрсем пулса 43 çын ĕçлеççĕ

Анчах мĕн тăваççĕ вĕсем? Профсойуз организацийĕ вĕсемпе ĕçлемест, канашлусем туса иртермен, вĕрентмен. Çавăнпа вăл инспекторсем хăйсем те техникăна сахал пĕлеççĕ. Кун çинчен рабочи инспекторсем нойаберĕн 13-мĕшĕнче пулса иртнĕ завком пленумĕнче питех уççăн кăтартса пачĕç.

— Пире вĕрентмеççĕ. Профсойуз организацийĕ епĕр мĕнле ĕçлесе пынипе интересленмест. Епĕ хамăр цехра мĕнле ĕççем тумали çинчен профсойуз организацине çырса панăччĕ. Ответ илеймерĕм, пырса та тĕрĕслемерĕç. Инспектăрсене заданисем парса вĕсенчен ыйтас пулат, вĕсене вĕрентмеле,—тет авсă пукансем тăвакан цехри инспектор Власов йулташ.

Кăçалхи çул чылай цехсенче вентиљатăрсем тумала пулнă. Дирекци столљарнăй цехра пысăк езгауст (тусан тасатмали) тата паркетнăй потока урăх вырăна куçарнисĕр пуçне урăх ним те туман. Урапа цехĕнче паркетнăй потокра куççа çўрекен вентиљаци туман.

Август уйăхĕнче йатарласа килнĕ бригада столљарнăй тата биржасырйо, механически цехра, хăмасурмали цехан çўлти хутĕнче çутă çителĕксĕррине палăртса хăварнă. Унтанпа сахал туна. Çутă парассипе нимĕн те туман.

Калас пулат, цехсен çийĕсене витессине те, кантăксене лартассине те кайа хăварчĕç. Столљарнăй цех çине халĕ витсе пĕтермен. Поçолкăра канализаци тăвасси те вăраххăн пырат. Цехсенче умываљниксем çителĕксĕр. Електричествăла алшăлисем пĕр столљарнăй цехра кăна, вăл та час типĕтеймест.

Пренире тухса калакансем техникăна вĕрентес ĕç начар пыни çине кăтартса пачĕç. Суранлăхсем пуласси рабочисене техникăна лайăх вĕрентменнинчен килет. Рабочисене тĕплĕн вĕрентмесĕрех станоксем умне ĕçлеме тăраççĕ. Фабрик-завод шкулĕнчен вĕренсе тухнисене те специаљнăççем тăрăх ĕçлетермеççĕ, столљарсем урапа йе урăх цехсенче пачах пĕлмен ĕçсенче ĕçлеççĕ.

Чапрайева, Кисељова йулташсем цехсенче, хватерсенче хĕллене хатĕрленессипе дирекципе çурт-йĕр пайĕ начар ĕçленине палăртрĕç.

Хăр. Лисин.

—◆ o ◆—

Профсойузсен çитменлĕхĕсене пĕтермеле

Çентаберĕн 27-мĕш числинче тухнă „Правда" хаçатра, профсойуз оргăнĕсенче пулнă халăх тăшманĕсем профсойуз йухăмне вăйсăрлатассишĕн, ăна пĕтĕмпех пĕтерсе лартассишĕн ĕçленине тата хăшпĕр вырăнти оргăнсемпе партин уйрăм членĕсем профсойузсене политикă тĕлĕшĕнчен хакламасăр, клас тăшманĕсене профсойузра хўтĕленсе пурăнма май туса панине лайăх палăртнă.

Чăваш республикинчи профсойуз членĕсем хушшинче политикăла ăнлантару ĕçне çителĕклĕ сарса йаман, хăшпĕр районсенче ку ĕç пачах çук тесе пулат.

Сăмахран, Йелчĕк районĕнчи судпа прокуратурă профсойуз коллективĕ ку тарана çитсе те профуполномоченнăй суйламан, профсойуз членĕсем прокурор Кадыковпа халăх сучĕн председателĕ Салагайкин, парти ĕретĕнче тăраççĕ пулсан та, март уйăхĕнчен пуçласа член укçине тўлемен.

Кунта профсойуз членĕсем хушшинче, хăшпĕрисем член кĕнекисене çухатнисем те пур.

Сăмахран: Шупашкарти правă шкулĕн директорĕ Василий Вавилович—„Пароход çинче член кĕнекине кăларса кайрĕç"—тесе пĕлтерет. Аслă суд секретарĕ Родионова „канцељаринчи сĕтелтен вăрласа кайрĕç" тет. Зашчитниксен коллективĕн членĕ Карасков—„Куйбышев хулинче кăларса илчĕç" тет.

Пирĕн задачă, совет суйлавне хатĕрленессипе пĕрлех, профсойузри çитменлĕхсене кашни кун пĕтерсе пырассишĕн тăрăшмала.

Морозов.

Мускав хулинчи Сталински суйлав округĕнче

Мускав хулинчи Сталински суйлав оркругне кĕрекен Куйбышев йачĕпе тăракан електрокомбинатăн парти организацийĕ суйлавçăсем хушшинче массăлă-йнлантару ĕçне вăйлăн туса пырат.

Куйбышев йачĕпе тăракан електрокомбинатăн завочĕсенче Сталински суйлав округĕнче пурăнаканнисене ултă пин çын ытла шута илнĕ. Кунта 25 тĕрлĕ суйлав округсенчи, вăл шутрах Мускав хулинчи пĕтĕм вунвиçĕ округри тата Мускав облаçĕнчи çирĕм суйлав округри суйлавçăсем ĕçлеççĕ. Суйлавçăсен çав групписенче агитацилĕ-массăлă ĕç тума електрокомбинатăн парти организацийĕ пилĕкçĕр йахăн агитаторсемпе беседчиксем уйăрнă.

Кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче агитаторсем мăçтерскойсемпе бригадăсене çÿреççĕ, суйлавçăсен кашни группипе вĕсен суйлав округĕ тăрăх тăратнă Сойуз Советне тата Национальнăçсен Советне суйламали кандидатсем çинчен калаçу туса ирттереççĕ, çав кандидатсемшĕн сасăлама чĕнеççĕ.

Електрокомбинатăн парти организацийĕ хăй коллективĕн членĕсем хушшинче ĕçленипе çарăнса тăмасăр, агитацилĕ-массăлă ĕçе суйлав участкисенче те туса пырат. Комбинатăн агитаторĕсемпе беседчикĕсене тăхăр суйлав участки çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем вальли суйлав кампани тĕлне пичетрен тухнă плакатсем тата темиçе вунă пиншер екземпльар кĕнекесемпе брошÿрăсем илсе панă.

Суйлав участкисенче суйлавçăсемпе Сталин йулташ çинчен калаçусем туса ирттереççĕ. Беседчиксем суйлавçăсем патне Кавказ лешйенчи ватă рабочисем Сталин йулташ çинчен аса илсе çырнă кĕнекесемпе пыраççĕ, ĕççыннисене ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйламали пĕрремĕш кандидатăн пурнăçĕпе тата революцилĕ ĕçĕпе паллаштараççĕ.

Сталински суйлав округĕнчи суйлав комиççийĕ халĕ, нимрен ытла, суйлавçăсен спискисене тĕрĕслессипе ĕçлет. Участкăри суйлав комиççисене суйлавçăсен спискисемпе паллашма кулленех çĕршер çын пыраççĕ. Вĕсем суйлавçăсен спискисене тĕплĕн тĕрĕслеççĕ.

Пайанхи куна ĕнтĕ Сталински суйлав округĕнчи пĕтĕм суйлавçăсен утмăла йахăн процентĕ спискăра хăйсем çинчен пана сведенисене хăйсем тĕрĕсленĕ. Тепĕр темиçе кунран округри суйлав комиççи суйлавçăсен спискисене тĕрĕслессине урăхла формăпа туса пăхма тытăнат. Мĕнле те пулин сăлтавпа участкăри суйлав комиççинче пулайман суйлавçăсем патне, вăл комиççи членĕсем кашни суйлавçă çинчен панă сведенисене вырăнта тĕрĕслеме хватерсене пыраççĕ.

(ТАСС).

ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйламали кандидатсем хăйсен суйлавçисем патĕнче

Совет халăхĕ ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали историлĕ куна пысăк хавхаланупа хатĕрленет.

Пĕтĕм Совет Сойузĕпех массăлă митингсем тата пухусем пулса иртеççĕ. Вăл митингсемпе пухусенче çĕршывăн чи лайăх çыннисем, ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйламали кандидатсем хăйсен суйлавçисене тĕл пулаççĕ.

Суйлав умĕнхи митингсемпе пухусенче тухса калаçакансен сăмахĕсем большевиксен партине, халăхсен генийĕ çулçăне, ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйламали пĕрремĕш кандидата—Сталин йулташа тарăн юратупа син калаççĕ.

Магнитогорск суйлав округне кĕрекен Верхнеуральск хулинче пысăк митинг пулса иртнĕ. Митингра пулнисем Верхнеуральск ĕççыннисем хăйсен сасăсене сталинла чаплă питомцăсене Коробовпа Иванов йулташсене сасăпа парасçĕ, тенĕ. Иккĕшĕ те вĕсем усă пурнăç çулĕпе утса тухнă: Коробов йулташ—черноработчирен пысăк металлурги комбиначĕн директорĕ таран, Иванов йулташ рабочирен магнитогорски заводĕн пысăк цех начальникĕ таран ÿснĕ.

Митингра Коробов йулташ сăмах тухса калани. Митингри халăх Коробов йулташа хĕрÿллĕ кĕтсе илнĕ.

— Епĕ сире, кăмăллă йышăннăшăн тата мана шаннăшăн пĕтĕм чунран тав тăватăп,—тенĕ Коробов йулташ.—Совет халăхĕн депутачĕ пулни—пысăк чыс. Епĕ аслă Сталин йачĕпе тăракан комбината Совет Сойузĕнчи малти предприйатисене хăпартас тĕлĕшпе пĕтĕм вăйа хуратăп. Кирлĕ пулсан, епĕ тăван çĕршывра парти ĕçĕшĕн хамăн пĕтĕм пурнăçа паратăп.

Мускав облаçĕнчи, Раменски район посолокĕнчи 1.700 ытла суйлавçă хăйсем тăратнă Сойуз Советне суйламали кандидата йатлă ткачиха Матрйона Кузьминична Симожненковăна кĕтсе илме пуçтарнă.

— Пирĕн районра Ленин—Сталин партийĕ вĕрентсе çитĕнтернĕ йатлă ткачиха Симожненкова йулташ ÿснипе, епĕр телейлĕ,—тенĕ стахановец-прйадилщик Гладышев йулташ. Вăл пурнăçа тата ĕç çыннисем мĕн ыйтнине лайăх пĕлет.

Симожненкова йулташ сăмах илсен, йăна пĕтĕм халăх хĕрÿллĕ саламланă.

— Совет влаçĕ пулнăранпа çирĕм çул хушшинче,—тенĕ Симожненкова йулташ,—Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе епĕр пысăк çĕнтерÿсем турăмăр. Вĕсене Сталинла Конституци çине çырса хунă.

Партипе правительствă пиншер çĕнĕ çынсене—стахановецсене вĕрентсе çитĕнтерчĕç. Манăн Кремльре Сталин йулташа тата унăн соратникĕсене курма пысăк телей пулчĕ. Сталин йулташ канин работницăна ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕ. Епĕ нумай практикăла сĕнÿсем патăм. Вăл сĕнÿсене правительствă пиравăр промышленнăç ĕçне лайăхлатасси çинчен кăларнă постановление пурне те шута илнĕ.

Акă мĕне илтесçĕ пирĕн правительствăпа Сталин йулташ рабочисен сассине. Ку ĕç çинчен епĕ нихăçан та манмастăп. Простой работницă государствă ĕçĕсене тата паннине ăçта курнă?

Пирĕн совет влаçĕ пире çул пачĕ. Суйлавçăсем шаннине епĕ чыспа тавăратăп. Пĕтĕм вăйа рабочи клас ĕçĕшĕн, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн паратăп.

Курск облаçĕнчи Касторнă посолокĕнчи колхозниксем тата машинăпа—трактор станци рабочисен тăватă пин ытла митингĕнче Касторнă суйлав округĕнчен тăратнă Сойуз Советне депутата суйламали кандидат Мускаври Сталин йачĕпе тăракан автозавод директорĕ Лихачев йулташ сăмах тухса калани.

— Епĕ, есĕр шаннине ĕçпе тавăрма тăрăшатăп,—тенĕ вăл. Большевикла сăмах паратăп: пĕтĕм хамăн вăйа, пĕлÿве, опыта, кирлĕ пулсан, пурнăçа та коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн паратăп.

Рабочисем, колхозниксем, инженерпа-техникăлă работниксем Касторнă суйлав округĕнчи пĕтĕм ĕççыннисене талантлă хуçайственник, рабочи-слесăртан автомобил промышленнăçĕн гигантла комбиначĕн директорĕ таран ÿснĕ Лихачев йулташшăн сасăлама чĕннĕ.

(ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

★ **Мирошниченко йулташăн паха рекорчĕ.** Нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче Ильич йачĕпе тăракан заводри паллă стахановец прокатчик, Мариуполь суйлав округĕ Сойуз Совечĕн депутачĕ пулма тăратнă кандидат, Леонтий Трофимович Мирошниченко йулташ пĕтĕм сойузри çĕнĕ рекорд тунă. Вăл 1-мĕш №-лĕ стан çинче пĕр сменăра 261 тоннă металл прокат тунă. Станăн техникăла пултарулăхĕ 190 тоннă.

★ **Таджикистан çĕрмамăк таратас çулталăклăх плана** 100,1 процент тултарнă. Çĕрмамăк хатĕрлес ĕç малала пырат.

★ **Çурçĕр-Кавказ çар округĕнчи** Н-ски стрелковăй дивизин командирĕсемпе красноармейцисем 20 градуслă сивĕ, çил тата тарăн йур пулнине пăхмасăр Казбек тăррине массăлăн хăпарнă. Унта вĕсем пулеметсемпе тата винтовкăсемпе пемели занятин ирттернĕ.

★ **400 вагон йолка** асатат кăнтăрти йăсем вальли çĕнĕ çул тĕлне Вологдари культурă таварĕсен бази.

★ **Çак çул пĕтнĕ çĕре** Ленинград хулинчи урамсемпе плошчедсенчи електричествă хунарĕсен хисепĕ 29 пине çитет.

★ **Курортсем хĕлле те ĕçлеççĕ.** Кăçал минерал шывĕсен курорчĕсемпе Сочири курортсем хĕлле те ĕçлеме чарăнмаççĕ. Ремонта хупăннă курортсемсĕр пуçне ыттисенче сывалакансен хисепĕ çуллахи вăхăтри пекех пулат.

★ **Фотоискусствăн Пĕтĕм Сойузри выставки.** Иртнĕ кунсенче Мускаври Пушкин йачĕпе тăракан чаплă искусствă музейĕнче фотоискусствăн выставки уçălнă. Выставкăна пурĕ пин сурă ÿкерчĕк тăратнă. Профессионаллă фотографсен ÿкерчĕкĕсемпе пĕрлех выставкăра фотографи ĕçне йуратакансен ÿкерчĕкĕсем те нумай.

★ **Тĕне хирĕçле музей строителстви.** Мускавра Калйайевски урамри 23-мĕш номĕрлĕ суртра Тĕне хирĕçле Тĕп музейăн пĕрремĕш черетне туса пĕтерне. Унта çак кунсенче „Октабĕрти револуци 20 çул тултарни тата тĕн“ йатлă выставкă уçăлат.

★ **45 мĕлйун мандарин.** Нойабĕрĕн 15-мĕшне Грузи ССРеспубликинче пурĕ 45 мĕлйун мандарин хатĕрленĕ.

★ **КĔРКУННЕХИ ЙАРМĂРКАСЕМ.** Облăçри, хулари тата районти центрсенче пурĕ 2 пин ытла кĕркуннехи йармăркă пулса иртнĕ. Йармăркăсенче пур çĕрте те йалхуçалăх продуктисем питĕ нумай пулнă. Смоленскра йармăркă вăхăтĕнче хашпĕр продуктăсем унченхинчен пилĕк хут ытларах пулнă.

★ **ХУР АШĔНЧЕН ТУНĂ КОЛБАСА.** ССР Сойузĕн Апат-çимĕç промышленнăç комиссариачĕн Мускаври чăх-чĕп комбиначĕ хур ашĕнчен колбасасем туса кăларнă.

Шупашкарти йалхуçалăх институчĕн çурчĕ.

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Китайри вăрçă

Пĕтĕм Шанхай фрончĕпех—Фупань хулинчен (Йанцзы йуханшывĕн кăнтăр йенĕнче) пуçласа Чжапу хули (Ханчжоу заливĕ хĕрĕнче) таран çапăлах хайар çапăçусем пыраççĕ.

Йапонцăсем Китай столицине—Нанкина хÿтĕлекен Китай çарĕсен тĕп позицийĕсене татасшăн тата вĕсен тавра çавăрăнса пырасшăн пĕтĕм майпах тăрăшаççĕ.

Фушань районĕнче, Йанцзы йуханшыв патĕнче, йапонцăсем çитмĕле йахăн çар карапĕсем пухнă. Пурне те шута илсе пăхсан, йапони командованийĕ Йанцзы йуханшыв, инчи Китай фрончĕсенчен чи пысăкки—Цзйанинь çине пысăк атакă тума хатĕрленни курăнат. Цзйанинь Йапони флотне Нанкин патне кайма, шыва хирĕç тăвала куçма чарса тăрат. Хайар çапăçусем тата Шанхай—Нанкин чукунçулĕ тăрăх, стратагилĕ кирлĕ Сучжоу узĕлла станци районĕнче пыраççĕ.

Китайăн аслă çар командованийĕ Нанкина пĕтĕм вăйхăватпах хÿтĕлеме йышăннă. Столицă патне çĕнĕ çарсем пыраççĕ.

Пĕтĕм государствă ĕçĕсемпе йертсе пыма тата тăшмана нумай вăхăт хушши хирĕçлесе тăма чи лайăх майсем тăвас тĕллевпе Китайăн нацилĕ правителствине Нанкинран Чунцин хулине (Хĕвелтухăç Китайри Сычуан провинцийĕ) куçарнă.

(ТАСС).

Нанкинран пурне те куçараççĕ

НАНКИН, нойабĕрĕн 21-мĕш (ТАСС). Нанкинран куçарас ĕç пĕтсе пырат. Йутçĕршыв посольствисем хуларан çар карапĕсем çине лареа кайаççĕ. Совет посольстви тата ТАСС корреспонденчĕ нойабĕрĕн 21-мĕшĕнче ирхине Хаькоу хулине тухса кайнă.

Румынири çĕнĕ правителствă

Çак çулхи нойабĕрĕн 14-мĕшĕнче Румыни правителстви отставкăна тухнă. Кун хыççăн Румыни королĕ национал-царанистски (национал-хресченсен) парти текеннин лидерне (руководителне)—Михалакене çĕнĕ правителствă тума хушнă. Анчах король Михалаке умне услови лартнă—правителствă составне „румынский фронт“ текен фашисла ушкăнăн руководителне—Вайда-Войводăна обйазательнă кĕртмеле, тенĕ. Михалаке Вайда-Войводапа пĕрле правителствă тума килĕшмен. Вара король халиччен премйер-министр пулнă Татарескуна правителствă тума хушнă.

Румынире икĕ буржуалă пысăк парти пур. Вĕсем: либералсен тата национал-царанистсен партийĕсем. Çав партисен руководителĕсем йаланах правителствă тунă. Либералсен партийĕнче икĕ уйрăм пайсем пур: „ватă“ либералсен тата „çамрăк“ либералсен партийĕсем. Халиччехи правителствă отставкăна тухиччен „çамрăк“ либералсем влаçра тăнă, вĕсен руководителĕ Татареску премйер-министр пулнă.

Либералсем шултра финанс буржуазин тата шултра помешчиксен интересĕсене палăртса тăраççĕ. „Вата“ либералсен партин руководителĕсем чи пуйан банкирсем, вĕсем промышленнăçăн чи паха отраçлĕсемпе çыхăнса тăраççĕ. Национал-царанистки парти йалти вакбуржуалă тата кулакла сийсем çине тайанса тăрат.

Румынире правителствă кризисĕ пулни çĕршывра шалта тарăн хирĕçлĕхсем пуррине кăтартса тăрат. Ĕççыннисен йышлă массисем пит йăвăр пурнăçпа пурăнаççĕ. Румыни статистики пĕлтернĕ тăрăх, Румынири рабочисен 1936 çулхи ĕçукçи, 1929 çулхипе танлаштарсан, хими промышленнăçĕнче 85,8 процент, тир-сăран промышленнăçĕнче 59,4 процент, строителствă промышленнăçĕнче 61,1 процент чакнă.

Çав вăхăтрах пурăнма кулленех кирлĕ йапаласен хакĕ пĕрмайах ÿссе пырат. Çĕршывра реакци пуç пулса тăрат. Ĕççыннисем „хальхи режимпа килĕшменнине кăшт палăртсанах, ĕççыннисене хăйарран тапăнса пусараççĕ. Çакна каласан та çителĕклĕ, Румынире 1933 çулта „об осадном положении“ кăларнă саккун халĕ те вăйра-ха.

Румынири хресченсем калама çук хĕнхур курса, çуклăхпа асап тÿссе пурăнаççĕ. Хресченсене помешчиксем пусмăрлаççĕ, експлоатацилеççĕ. Хресченсенчен пысăк налогсем илеççĕ. Çавăнпа Румынире хресченсем йаланах выçă пурăнаççĕ.

Йулашки çулсенче Румыни правителстви фашисла елементсене ирĕк парса пынă тата тулти политикăра фашисла çĕршывсемпе çывхарса пынă. Çавăнпа ĕççыннисен массисем хальхи йĕркене хирĕç тăрасси ÿссех пырат.

Вайда-Войводă правителствăна кĕмен. Анчах правителствăна тепĕр фашисла ушкăнăн, „национальная партия“ текеннин, представителĕсем кĕнĕ. Çав партин виçĕ членĕ министрсем пулса тăнă. Унсăр пуçне, Румынийе Германипе çывăх пултарасшăн тăракан Манолеску-Трунга правителствă составне кĕнĕ.

Румынири пичет те: çĕнĕ правителствă — сылтăмри буржуалă партисем уçсăнах фашисла партисемпе тунă блок, тесе çырат. Пичет çырнă тăрăх, Румынири халь туса хунă правителствă вăхăтлăха мĕн. Румынири реакционерсем пĕтĕмпех фашисла правителствă туса хурасшăн. Хальхи правителствă çавна тума майсем хатĕрлекенскер пулса тăрат.

Францире фашиссен пысăк заговорне тупнă

Парижрен пĕлтернĕ тăрăх, Францин следстви влаçĕсем фашиссем Францири республикăлă режима хирĕç тунă пысăк заговорăн йĕрне тупнă.

Йулашки икĕ ерне хушшинче фашиссем хатĕрленĕ хĕçпăшал усрамалли пысăк складсем тата транспортсем тупнă. Вăл хисепре—500 ручной пулемет, çĕр пин патрон, пит нумай винтовкăсем тата гранатăсем пулнă. Хĕçпăшалĕсем Германире тата Италире тунăскерсем. Париж çывăхĕнче арсенал (хĕçпăшалсем усрамалли пысăк склад) тупнă. Ку арсеналăн çуртне йатарласах бетонран туса хатĕрленĕ.

Парижăн пĕр районĕнче пытанса пурăнмали вырăн тата госпиталь тупнă. Пытанса пурăнмали çĕре ленкме виçĕ вăрттăн алăкран кĕмеле. Госпиталĕнче емелсем тата хирурги инструменчĕсем пулнă.

Фашисла заговора организацилекенсен укçа-тенкĕ нумай пулни палăрат.

Ку ĕçпе тăхăр çынна арĕсленĕ. Ĕçе малала йĕрлеççĕ. (ТАСС).

Фашисла заговора пĕтерессишĕн

ПАРИЖ, 20 XI (ТАСС). Францири обшчественнăç фашисла заговора тăрă шыв çине кăларас тĕлĕшпе пит интересленет. Хаçатсем полици фашиссенне хĕçпăшал тупни çинчен çĕнĕ хыпарсем пичетлесе пыраççĕ.

Хаçатсем çырнинчен—фашиссен заговорĕ сарлакаскер пулни тата Францири фашиссем йутçĕршывсенчи фашисла державăсемпе çыхăнса тăни курăнат.

Ĕнер каçхине, Францин шалти ĕçсен министерствинче тата политикăла полицин тĕп çуртĕнче, фашисла заговора пĕтерес ыйтупа, совешчанисем пулнă.

Пĕчĕк Маклашкинăри хор Мускава кайат

Пĕтĕм Сойузри Радиокомитет ССР Сойузĕнче кăçалхи октабĕр уйăхĕнче пулса иртнĕ радиофестивалĕн итогĕсене пĕтĕçтерсе шута илсе тухнă. Республикăри 2-мĕш Радиофестивале хутшăннă художествăлă кружоксемпе уйрăм исполнителсем хăйсен пултарулăхне октабĕрĕн 23-мĕшĕнче Коминтерн йачĕпе тăракан станци урлă кăтартса пачĕç.

Фестиваль комиççин жÿри йышăннă тăрăх, радиофестивальре тухса йурланă йе выльанă чи лайăх коллективсемпе уйрăм исполнителсене Мускава чĕнеççĕ. Вĕсем Мускавра Коминтерн йачĕпе тăракан радиостанци урлă хăйсен пултарулăхне кăтартса параççĕ.

Мускава пĕтĕмпе 18 коллектив тата 34 уйрăм исполнителсене чĕнеççĕ. Вăл шутран пирĕн Чăваш республикĕнчен Пĕчĕк Маклашкинăри А. Н. Тогайев йертсе пыракан колхоз хорĕ тата Хуракассинчи вăтам шкулта вĕрентекен учител Т. С. Патрик й. (пĕччен йурлакан) Мускава кайаççĕ.

Çĕнĕ кино-картинăсем

Россснабфильмăн Чăваш республикĕнчи кантурĕ çĕнĕ кино-картинăсем илсе килет. Вăл картинăсене çак кунсенчех республикăри кинотеатрсенче кăтартма пуçлаççĕ.

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн суйлав кампанийĕ вальли „Как будет голосовать избиратель“ („Суйлавçă мĕнле сасăлат“) йатлă фильм килет. Тата суйлав кампани çинчен хроникăлă картинăсем (калаçакании 11 ÿкерчĕк, ахальли 12 ÿкерчĕк) килнĕ.

Нойабĕрĕн 25-мĕшĕнче Сталин йулташ Пĕтĕм Сойузри Советсен Чрезвычайлă VIII-мĕш Сйесĕнче ССРСойузĕн Конституци пройекчĕ çинчен доклад туни тата декабĕрĕн 5-мĕшĕнче Советсен Сйесĕ ССР Сойузĕн Конституцине йышăнни çулталăк тултарат. Çак вăхăтра кино-театрсенче кăтартма „Доклад товарища И. В. Сталина на Чрезвычайном VIII Всесоюзном С'езде Советов“ фильм килнĕ.

Колхоза кĕреççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Чапайев йачĕпе тăракан колхоз йышĕ ÿссех пырат. Кăçал колхоз вăйлă тырпул туса илчĕ. Йалти йединоличниксем пуйан та культурлă пурнăçа колхозра çеç пулнине ăнланса илеççĕ. Чеблуков йединоличник хăйĕн çемйипе колхоза кĕчĕ. Зайавлени панисем татах та пур.

С.

Радио лартрĕç

ЙЕТĔРНЕ. Пушнарти Мичурин йачĕпе тăракан колхоз клубне Аслă Октабĕр уйавĕ умĕн радио лартрĕç. Колхозниксем клуба йаланах радио итлеме пухăнаççĕ.

Ф. Кольцов, А. Соловйов.

Тĕрĕ ăсти

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Енгельс йачĕпе тăракан колхоз членĕ А. Мазакова тĕрĕсем тума ăста. Вăл 35 тĕслĕ тĕрĕ тума пултарат. Халĕ вăл Сталин йулташ сăнне пир çине тĕрлет.

Самарин.

Тивĕçлĕ наградă

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинчи 5-мĕш участкăри платниксен бригадирне Петр Скорбов, 4-мĕш участкăри платниксен бригадирне Иван Алексейев йулташсене лайăх ĕçленĕшĕн „Почетному железнодорожнику“ значокпа наградăларĕç.

Пр. Йаргуньин.

Студентсем значоксем илчĕç

Шупашкарти педрабфакра вĕренÿ çулĕ пуçланнăранпах ПВХО, ГСО, Ворошилов пек тĕл перекенсен кружокĕсем ĕçлеççĕ.

Кружоксенче 57 студент йĕркелĕ вĕренсе пыраççĕ. Нойабĕрĕн 20-мĕш тĕлне 14 студент ПВХО, 4 студент Ворошиловла тĕл перекенсен значокĕсене илчĕç.

А. Иванов.

Атăл çинче

Нойабĕрĕн 21-мĕшĕнче, кăнтăрла иртсен 4 сехет патнеле, Шупашкар тĕлĕнче Атăл пăрĕ ларчĕ. Пайан, нойабĕрĕн 23-мĕшĕнче, Атăл урлă çуран каçмала пулат. Ĕнер, нойабĕрĕн 22-мĕшĕнче, пăр тин ларнă пирки, çуран та каçармарĕç.

Писателсен пухăвĕ

Пайан, каçхине 6 сехетре, Чăваш Совет писателĕсен Сойузĕн членĕсемпе кандидачĕсен пухăвĕ пулмала. Пуху Данилов-Чалдун йулташ творчĕстви çинчен сÿтсе йават. Докладчик—Елкер йулташ.

Пухăва (Пичет çурчĕ, 3-мĕш хутлăх, 31-мĕш пÿлĕм) писателсене, литкружок членĕсене тата литературăпа интересленекенсене чĕнеççĕ.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Писателсен Сойузне

Чăвашла тата вырăсла машинкăпа пичетлеме пултаракан

машинисткă кирлĕ

Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх.

Адрес: Пичет çурчĕ, Писателсен Сойузĕ. Телефон № 5—35.

Пур колхозсене те асăрхаттаратпăр!

Клевер вăррине планран ирттерсе ытлашши панăшăн колхозсене памалли премисене, çавнашкалах вăрлăхлăх вăрă парассине те кăçалхи декабĕрĕн 1-мĕшĕчен клевер вăррине парса татнă колхозсене çеç параççĕ.

Клевер вăррине декабĕрĕн 1-мĕшĕ иртсен тин парса татакан колхозсене вăрлăхлăх вăрă тата премисем памаççĕ.

Госсортфонд

Йĕтĕн хатĕрлев кантурĕ.

2—2.

Конторă вальли уйрăм пÿлĕм тата специалиссем вальли

ХВАТЕРСЕМ

КИРЛĔ.

Хак килĕшÿ тăрăх.

Çак адрĕспа пĕлтермеле: Урицкайа урамĕ, 13, Чăвашмельтрест. Телефон № 4—16 йе 2—16.

3—3

ЧĂВАШЛЕСПРОМСОЙУЗА—

Шупашкар, Кадыков урамĕ 7

йалан ĕçлеме

Вăрнарта, Шупашкарта, Кивĕ Ейпеçре, Çĕмĕрлере тата Сурмайданра ĕçлесе пурăнма

пилĕк лесотаксатор кирлĕ

Чăвашлеспромсойуз.

2—2.

Шупашкарти Çуртйĕр кооператив йулташлăхне

пĕтермеле тунă пирки

Йулташлăхăн пур членĕсен, учреждениен, тата организацисен 1937 çулхи декабĕрĕн 10-мĕшĕччен йулташлăх правленине претензи памала

Йулташлăхăн пур членĕсен те 1937 çулхи декабĕрĕн 10-мĕшĕччен çĕнĕрен регистрациленмеле тата хăйсен йулташлăхпа пĕр-пĕрин хушшинче пулакан расчочĕсене тĕрĕслесе хумала.

Çĕнĕрен регистрациленме кашни кунах 3 сехетрен пуçласа каçхине 8 сехетчен пыма йурат.

Çĕнĕрен регистрациленмесĕр йулнă членсем Çурт-йĕр кооператив йулташлăхăн членĕсен шутĕнчен механически тухса ÿкеççĕ.

Йулташлăх правленийĕ.

Тутаркас районĕнчи тата унпа йунашар районсенчи колхозсене, колхозниксене, шкулсене тата учрежденисене.

ШУПАШКАРТИ „ГОРТОП“-ăн

Сÿктерти хăма çуракан заводĕнче вутăлăх тата карта тытмалли хăма таврашсем сутлăх пур. Хакĕ—8 тенкĕ кубометр (суйламасăр)

Колхозсемпе организацисем хăма таврашсемшĕн тÿлемелли укçана Шупашкарти ГОРТОП-ăн 676 №-лĕ счочĕ çине Государствă банкĕн Чăваш кантурне перечислени тума пултараççĕ. Колхозниксен Сÿктерте йе Шупашкарти Гортоп кантурне укçан тÿлемеле.

3—1

„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илмелли хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 882 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2370. Тираж 13964. 58—92 см. 1—1 п. л.